# СУНТАЛ



№ 1 (105)
1934 с.

# Журналта пурри

стр.

1. **Н. Шупуççынни**—Пĕтĕм тĕнчешĕн чаплă историлĕ ĕçсем (умстатйа) . . . . . . . . . . . . . . 1
2. **Арк. Ĕçхĕл**—Хĕллехи салам (сăвă) . . . . . . 4
3. **А. И. Золотов, Н. Ф. Данилов, Н. Т. Ваçанка, В. А. Долгов**—Илемлĕ литературăн пайанхи ыйтăвĕсем (статйа) . . . . . . . . . . . . . . . . 5
4. **Арк. Ĕçхĕл**—Кĕçĕн çын (сăвă) . . . . . . . . 8
5. **Лашман**—Мускавра Ленин патĕнче (очĕрк) 9
6. **Иваңук Вашки**—Йанвар каçĕ (сăвă) . . . . 12
7. **Виктăр Гусев**—Вунаçуллăх (сăвă) . . . . . 13
8. **Ал. Каттайпа Вашки**—Çурхи кĕвĕсенчен, Йешĕл улăхра, Хĕр—агронома, Итем çинче (сăвăсем) . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 14

**Уйăр Х.**—Партизансем (калав) . . . . . . . . 18

10. **М. Йеник**—Пĕр ик сăмахăн(очĕрк) . . . . . 20
11. **Пенеп Иванĕ**—Ирхи трамвай (сăвă) . . . . 23
12. **Вашки**—Хуралçă, Кашла, кашла (сăвăсем)
13. **Рзай**—Çамрăк поетсем (Пушкай, Каттай, Вашки пултарулăхне пăхса тухас майпа тунă доклад) . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 24
14. **Демидов**—ЧАССР-ĕн 15 çулĕ тĕлне пысăк выставкă тăвассишĕн (статйа) . . . . . . . . 27
15. **Долгов В**—Ҫамаңĕн иккĕмĕш сборникĕ çинчен (критикă) . . . . . . . . . . . . . . . . 29
16. **Вуколов Ф.**—Мăраңка Микихверĕн „Елнет" драмийĕ пирки (критикла статйа) . . . . . . 30
17. Литкружоксен вĕренӳ программисем . . 32
18. **Патман Н.**—Хусанкай сăввисем (статйа) . 33

# ИСКУССТВĂ ХРОНИКИ.

* Февралĕн 23-мĕшĕнче чăваш совет художникĕсен сойузĕн оргкомитечĕ уçăлни çулталăк çитет. Çав йатпа чăваш художникĕсем пĕчĕк выставкă туса иртереççĕ. Выставкă Чăваш автономин 15-мĕш çулхи уйавĕ йачĕпе пулмали пысăк выставкă умĕн художниксен пултарулăхне сăнаса тухас тĕлĕшпе пулса иртет.

* Май уйăхĕнче Горки хулинче художниксен крайри выставки пулса иртет. Вăл выставка картинсем йама чăваш художникĕсем те хатĕрленеççĕ (Мйаçников, Çпиридонăв, Йури Зайцев, т. ыт. те).

* **Мйаçников** художник йулашки вăхăтра портретсем çырас ĕçе тимлĕн тытăнчĕ. Вăл халĕ: Уйап Мишши, Краснов-Кĕçĕнни, Йăван Мучи, тата çулйĕр ударникĕ Чубуков портречĕсене çырса пĕтернĕ. Малала урăх пысăк картинсем çырма тытăнат.

* **Йури Зайцев** художник çак илемлĕ картинсене çырса пĕтернĕ. „Тĕрлекен", „Колхоз хĕрĕсем 2-мĕш пйатилеткăра", „Партин 17-мĕш конференци", тата Шупуççынни портречĕ.

* **Мйаçников** художник „Социалисăмла учот" йатлă скулҫтурлă произведени хатĕрлет. Ескизне туса пĕтернĕ.

* **Çпиридонăв** художник „Радио итлеççĕ" илемлĕ картинă, Мраңкапа Шелепи портречĕсене, т. ыт. те çырат.

* **Макарăв** художник Алагер, Митта Ваçли, Макçимăв-Кошкински сăнĕсене çырса пĕтернĕ. „Активиса вĕлерни" йатлă ескиз хатĕрлет.

* **Чăвашсен Патшалăх Академи театăрĕ** çитес уйăхсенче лартма çак чăвашла пйессăсене репертуара кĕртнĕ: клаççиксенчен—Шекçпирăн „Гамлет" йатлă трагедине, Мольерăн „Мещанин—дворянин" комедине; чăваш драматургĕсем çырнисенчен—Талмăрзан „Кам айапĕ" пйессине, Йалавинăн „Савăт сасси", Алагерăн „Ураса" (йусанă хыççăн), тата „Кашкăр" пйессисене, П. Осипăвăн „Кушар" тата „Айтар" (йусанă хыççăн) йатлă драмисене, т. ыт. те.

* Чăваш правительстви йанă екçпедицире пулнă музыкантсем йалсемпе колхозсенче 700 йура çырса илнĕ. Вĕсем хушшинче пит илемлĕ, хитрелетмесĕрех концертсенче йурлама йурăхлă йурăсем пур.

* Чăвашсен патшалăх издательстви çамрăксем валли декламатор кĕнеки кăларат. Пысăкĕш 6 пичетлĕ листа ытларах пулмала.

Вуннăмĕш çул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЙАНВАР 1934

# СУНТАЛ

1 (105) №

Чăваш совет писателĕсен Оргкомитечĕн уйăхра пĕрре тухса тăракан илемлĕ литературă, критикă, тата искусствă журналĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: Чувашреспублика, г. Чебоксары, Красная площадь, Наркомпрос, Оргкомитет СЧСП.

# Пĕтĕм тĕнчешĕн чаплă историлĕ ĕçсем

Пирĕн партин 17-мĕш сиесĕ питĕ паллă, аслă, етем ăрăвĕ манми кунсенче пухăнат.

Пĕтĕм тĕнчери рабочи класăн аслăран та аслă вĕрентекенĕ, аслăран та аслă револуционер Владимир Илйич Ленин вилнĕренпе парти 10 çул хушшинче унсăрăн, анчах ĕçхалăхне вăл кăтартса хăварнă çулйĕрпе çирĕппĕн те тĕрĕс йертсе пырса, клас тăшманĕсемпе пĕр хĕрхенусĕр, вăйлăн та çĕнтерулĕн çапăçса пырса социалисăмла аслă çĕнтерусем турĕ.

Çак иртнĕ çулсем, вунă чаплă, вăйлă кĕрешулĕ çулсем. Вĕсен хисепне пахаланă чух Ленин йачĕпе çыхăнтармасăр нийепле те вĕсене хаклаймастпăр.

Хăй организацилене те хăй пăхса устернĕ партийе пирĕн чаплă, аслă вĕрентекен аслă кăтартусемпе аслă çĕнусем парса хăварчĕ. Вăл пире партин çирĕп пĕрлĕхĕпе унăн иделлă йалавĕн тасалăхне астума хушса хăварчĕ. Вăл пролетариатăн диктатурине хытарса рабочисемпе хресченсен сойузне çирĕплетме хушса хăварчĕ. Вăл пире пĕтĕм Совет сойузĕнчи тĕрлĕ халăхсен ĕççыннисене тăванлă пĕрлештерсе çав сойуза çирĕплетме хушса хăварчĕ, ăна—тĕнчипе чăн пирвайхи совет çĕршывĕн тĕреклĕ никĕсне, хамăрăн куç шăрçине сыхланă пекех сыхлама хушса хăварчĕ.

„Вăл пире пролетарилĕ интернационалисăмăн принципĕсене тĕрĕс тытса усрама хушса хăварчĕ"

„Илйичсăр 10 çул, вунă çул аслă кĕрешу, çĕнтеру!"

(Постышĕв Харкăври партконференцинче каланинчен).

„Пĕтĕм тĕнчери пролетариатпа пусмăрта пурăнакан ĕççыннисен массишĕн пысăк хуйхă пулнă кунсенче, Сталин йулташ СССР-ти советсен II-сиесĕнче болшевиксен йачĕпе, пролетариатпа ĕççыннисен массин йачĕпе аслă çулпусĕ, аслă вĕрентекен Владимир Илйич Ленин хушса хăварнă аслă ĕçсене хапăл туса вăйхала хĕрхенмесĕр, вирлĕ, йалтах вĕсене хăватлă ĕçе кўртессишĕн кĕрешме пулса тупа турĕ" (çавăнах).

Вунă çул ĕнтĕ вăхăт иртрĕ. Вунă хисеплĕ, çирĕппĕн, вирлĕ, паттăрла çапăçнипе тĕнче курман çентерулĕ çитĕнусем тăвакан аслă вунă çул.

Пирĕн çĕршыв партин 17-мĕш сиесĕ патне нимĕнпе виçсе илейми аслă çĕнтерусемпе çывхарат. Партин 16 сиесĕ пулса иртнĕренпе 3 çул ытла иртрĕ. Çак хушăри самана хăйĕн йалтăртатса тăракан чаплă ĕçĕсемпе пĕтĕм тĕнчери пурнăçран геройлă саманан сăнĕпе çутăлса тухат, вăл килес ĕмĕрсем валли тĕлĕнмеле епоха пулса йулат.

Çак ĕçсене парти Ленин хушса хăварнине пĕр пăрăнмасăр ĕçе кўртнипе турĕ. Вăл ĕçсене парти хăйĕн пĕрлĕхне салатма пăхаканнисене хирĕç вирлĕн çапăçса çĕмĕрсе тăкнипе турĕ. Парти çак ĕçсене хăйĕн хурçă дисциплинишĕн оппортуниссемпе çапăçса, Ленин йалавне таса усранипе çĕнтерсе илчĕ. Вăл ĕçсем партин çĕнтерулĕ çапăçнин парнисем. Вĕсене ĕçхалăхĕ партин чаплă йертсе пыраканĕ, пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн йуратнă çулпусĕ Сталин йулташ, ĕçхалăх ăслăлăхне револуцишĕн çапăçма хаваслантарса йертсе пынипе çĕнтерсе илчĕ.

Çак револуцилĕ геройлă çулсен çутă хĕлхемĕсенче, октаберте буржуазийе хирĕç çĕмĕрсе тăкма хĕçпăшалланса çапăçма тухнă пролетариат çинчен хунă тĕлĕнмеле поемăсенче Ленинпа Сталин йачĕсем нимĕнрен те чаплă. Никам та вĕсен револуцилĕ ĕçĕсемпе тан ĕçсем халиччен ĕççынишĕн тĕнчере тăвайман. Çакăн пек историлĕ кĕске вăхăтра Сталин йулташ, аслă стратег, Ленинăн чи тĕрĕс вĕренекенĕ йертсе пынипе пирĕн миллионлă парти çав чаплă ĕçсене тума пултарчĕ. Çавăнпа та Ленин йачĕпе йунашар Сталин йулташ йачĕ йаланах пирĕн ăшăмăрта.

Вĕсен йачĕсем пĕтĕм тĕнчери пролетарилĕ револуцин йалавĕсем çинче йăлкăшаççĕ. Пĕтĕм тĕнчери етемсен чĕлхи çинче вĕсен ĕмĕр манми йачĕсем! Вăл йатсем пролетариатшăн малали çĕнтерун хĕçпăшалĕ, капиталиссемшĕн вилĕм курекен çимвăлсем.

Совет Сойузĕн куç хыпаласа илейми аслă çĕршывĕнчи чаплă пултарулăхпа çĕнтерусем—пирĕн пролетариатпа унăн партийĕ йертсе пыракан колхозниксемпе ытти ĕççыннисен пултарулăхĕ инкĕлми вăй кăларса социалисăм ĕçне тунине кăтартаççĕ.

Пирвайхи пйатилеткăн программине пирĕн рабочи клас тума тытăннă кунсенчен нумай та вăхăт иртмерĕ. Ăна ĕçе кўртме пуçланă вăхăтра тĕнчери капиталиссемпе вĕсен лакейĕсем йепле ĕçлесе çĕтĕлеччĕç. Вĕсене сутăннă çыруçăсемпе вĕреннĕ çынĕсем пирĕн ĕçсем ишĕлсе анасса ĕмĕтленеччĕç, вĕсем пйатилеткăна „утопи" тесе кулатчĕç, ăна болшевиксен пустуй суйланăвĕ тесе мăшкăлаччĕç. Буржуазин „пророкĕсем" йалтах суйана тухнипе хăйсем намăçса йулчĕç.

Пирĕн совет союзĕнче социализм çĕнтерессине буржуази ĕненесшĕн те марччĕ, шухăша та йарасшăн марччĕ. Ленин тĕнчери капитала хирĕç çĕкленĕ хĕç хуçăласса ĕмĕтленчĕç вĕсем.

Пулмарĕ вĕсен пек.

Ленин хыççăнхи, 10 çулхи тапхăр СССР-та социализмла обчĕствă тăвассишĕн хĕрÿлĕн çапăçса аслă та чаплă çĕнтерÿсем тăвакан тапхăр пулса тăчĕ.

Çак тапхăрта Совет союзне империализмла патшалăхсем нумай тапăрласа ишсе антарма хăтланчĕç, анчах пур чухне те вĕсен шухăшĕсем пирĕн коммуниссен партин çĕнтерейми тĕрекне, тата Совет союзне тĕнчери пролетариат сыхлама хатĕррине тĕл пулса сÿнсе пычĕç. Ленин социализм пĕр патшалăхра çĕнтерессе шантарнине халĕ епĕр ĕçе кĕртрĕмĕр!

Пирвайхи пйатилеткăн планне епĕр пролетариле çирĕп туса тухрăмăр.

Техникă тĕлĕшĕнчен чи малта тăракан промышлĕннăçа, халъхи вăхăтри йавăр индустрийе епĕр çĕклерĕмĕр. Рабочи клас етем историнче курман економикле переворот тунипе промышлĕннăçра та йалхуçалăхĕнче те йалтах социализм çĕнтерчĕ.

Социалънăй революцири чи йавăр та тарăн сарлака задачăна турăмăр: „Ленин партийĕ йертсе пынипе пролетариат милион хресченсене коллективлă ĕç малта тăнине тăнлантарса ĕнентерчĕ те йалта çĕнĕ колхоз стройĕ уçса пачĕ. („Правда" 1934 ç. йанварти умстатйаран).

Пйатилеткă Совет союзне чи малта тăракан индустрилĕ патшалăхсен еретне тăратнисĕр пуçне, колхоз йĕркишĕн çĕнтерÿ çулĕ уçса панисĕр пуçне,—çак пирвайхи пйатилеткă пире рабочисемпе хресченсем—колхозниксем хушшинчен çĕршер пинĕн çĕнĕ организатăрла талантсем тупса пачĕ. Çакна пуринчен ытла астумала.

Промышлĕннăçе, совхозсене, колхозсене вуншар милионăн çынсем кĕреççĕ те политикпа культурлă пурнăçа тума хутшăнаççĕ, вара хăйсен ретĕнчен çĕнĕ организатăрсем самородкăсем кăларса тăратаççĕ. Халăх хушшинче халиччен пытанса выртнă вăйла сийсем революцилĕ ĕçленипе тапранаççĕ те хăйсем революцийе мала йаракан вăй хăват пулса тăраççĕ. Социализмшăн кĕрешекен çав милион паттăрсен йачĕсем: бригадирсем, ударниксем, колхоз правленисен председатĕлĕсем, колхоз йачейкин секретарĕсем.

Çаксем ĕнтĕ хамăр çĕршывăн социализмла ĕçĕсене çав тери пысăк хăвăртлăхлă утăмсемпе пĕр-пĕрине ăмăртса малала йараççĕ. Пирвайхи пйатилеткăна ăнăçлă тултарнипе епĕр пирĕн партин политики чăн тĕрĕс çулпа пынине куратпăр. Çак ăнăçăва епĕр клас тăшманĕпе тата хамăр партин еретĕнчи вĕсен агĕнчесене мĕн пур вăйпа çапăçса çĕнтернипе турăмăр.

„Пйатилеткăна тултарнипе пĕтĕм тĕнчери çĕршер милийон ĕççынĕн пичĕ куçĕсем умĕнче пĕр çĕршывра социализм тума пултарнине етем историнче чи пирвай ĕçпеле кăтартрăмăр". (Молăтавпа Куйбышев доклачĕсен тезисĕсенчен).

Пурăнăçра, кашни малала пусмассерен Ленинăн хамăр çĕршывра социализм тума пултармала тенĕ теорине ĕçпе чăнлатпăр.

**Çак теори, пирĕн мĕн пур ĕçсен никĕсĕн кĕтеорн чулĕ пулса** тăрат. Вăл массăсене хăйсен вăйĕсене пуçарса йарса авалхи ылханлă ирсĕрлĕхпе çапăçма çивĕчлентерсе харсăрлантарат, вăл теори çĕнĕ йĕркелĕ пурнăç тутарат. Парти çак никĕслĕ ыйтура хăйĕн позицинчен пăрăннă пулсан,—вăл аслă вĕçĕхĕрриссĕр тинĕсре карапа компăссăр йертсе пыракан капитан йевĕрлĕ пулнă пулĕччĕ. Çак ленинисăмăн чи чаплă ыйтуне—революцилĕ теорине—Сталин йулташ ĕçе йепле кĕртмелине массăсене тăнлантарса кăтартса пачĕ те хăйĕн пит пысăк тимĕр пек çирĕп ирĕклĕ вăйĕпе, ĕçе пĕр пăрăнмасăр çийĕнче туса пынипе, çĕнтерÿлĕ пролетарилĕ революцин никĕсĕнчи никĕсне хирĕç тăракансене çĕмĕрсе тăкрĕ.

„...Сталин йертсе пынипе парти уçă çапăçура **троцкисăма** çĕмĕрсе тăкса ăна партирен уйăрса пăрахнă; **сылтăм оппортуниссене** çĕнтерсе тăкнă, вĕсене партийе пăхăнтарнă; **националисăмла сулăкчăкçăсене** палăртса çĕмĕрсе тăкнă; **примиренцăсене** çăварлăхланă; **икĕ питленекенсен** маскисене сÿсе илнĕ. Йулашки вунăçуллăх историйĕ парти Сталин йертсе пыракан ленинла Тĕпком тавра пĕтĕçни пĕрмайах ÿссе пынă вунăçуллăх пулса тăрат. Болъшевиксен партийĕ халъхи вăхăтра хăйĕн историнче нихăçан та пулман таран пĕтĕçÿлĕ тата пĕр шухăшлă (Маркс, Енгĕлс, Ленин институчĕн Ленин çинчен сырнă тезисĕсенчен).

Çапла ĕнтĕ пйатилеткăн çĕнтерĕвĕ пирĕн партин, унăн çулпуçĕн Сталин йулташăн, пйатилеткăна чĕртсе йараканăн, ăна вут-хĕмлентерекенĕн чаплă çĕнтерĕвĕ пулса тăрат.

Пирвайхи „пйатилеткăн ăнăçăвĕсем капитализма хирĕç мĕн пур тĕнчери рабочи класăн революцилĕ вăйĕсене мобилизацилеççĕ,—çакă тавлашмала мар факт" (Сталин).

Çакăн çинчен халъхи писатĕлсемпе поетсем мĕнле поемăсем çырмаççĕ, мĕнле кĕвĕсемлĕ сăвăсемпе композиторсем килес ĕмĕрсемшĕн парнелеççĕ, ÿлĕмрен шăтса ÿсес талантсене мĕнле сăнлăхсем парса хăвармаççĕ! Ку пултарулă çĕнтерÿсене етем ăрăвĕ умне тăратса кăтартма писателсемпе композитăрсем, художниксем, скулъптăрсем пĕрлешрĕç. Вĕсемпе пĕрлех тĕрлĕ архитектăрсем, инженерсем ĕмĕр ишĕлми çуртсемпе, дворецсемпе, памĕтниксемпе, гидро-електростройсенчи çутăлса шавлакан çĕршыв вăйĕн музăкĕсемпе пйатилеткăна аслăлаççĕ.

Ку героиклă епохăна тивĕçлĕ епопейă тума милионлă ĕçлĕ çар пулăшнипе вĕсен ĕçĕ ăнăçлă пулса пырат. Çав милионлă ĕçлĕ çар хаваслантаракан искусствă çынĕсем Ленинăн искусствă тĕлĕшпе вĕрентнине—политикли теорине ĕçе кĕртнипе хăвăрт малала утаççĕ. Ленин политики вăл—клас тăшманĕпе нихăçан та килĕшме пĕлмен политикă. Çав килĕштерменлĕх пролетариат интересĕпе буржуази интересĕ теорире те, ĕçре те, пур чухне те, вĕçне çитиччен хирĕçле пынине пĕлтерет, вăл историри революцилĕ çапăçура капитализм хăтăлса йулас çуккине малала вичкĕн курса систерет. Çав вăхăтрах вăл Ленин халăх масси ăшĕнчен иксĕлме пĕлми вăйпа пуçарулăх тухса тăрассине шанчăклă пахалса малтанах курнине кăтартат.

Ĕççыннисене милионшерĕн организацилени—çĕнтерÿлĕ пролетарилĕ революцин тарăн çăл куçĕ пулса тăнине Ленин малтанах курнă. Ленин вăл—хăйĕн ăс-хакăлне пĕтĕмĕшпех революцийе парăн-

тёрлё чаплă революционер, вăл массăсемпе тачăма тачă çыхăнса, вĕсене тăнлантарса пĕр çулйĕрпе йертсе пымашкăн пĕлнĕ вăй-хăват, вăл çав массăсем хăйсен пурнăçне йусамашкăн çапăçса кĕрешнинчен вĕренсе хăй ĕçĕ валли меслетсем тупма пĕлнĕ гени.

Ленинăн пурнăçĕпе вĕрентĕвĕ вăл малта пыракан класăн ăсĕпе ирĕкĕн вăйлă сăнлăхĕ. Çав генилĕ сăнлăх етем ăрăвне малала кайасран тăлантарса-çыхлантарса тăракан кивĕ обчĕствăн сăнчăрĕсене çапса салатмалли историлĕ задачăсене хăй çине илчĕ те, çĕнĕ йĕркелĕ, сарлака та вĕççĕр, çулпа малала утмали обчĕствă тума çул уçса пачĕ.

„Наукăпа кулĕтурăна буржуазин тăлпинчен салантарса капитал пусмăрĕнчен хăтарссине Ленин пролетарилĕ революцин калама çук асла задачисенчен пĕри тесе шутланă. „Социалисăм кăна çакна ĕçе кĕртме пултарат", тенĕ вăл. Çак чăнлăха ăнланса илесси марксисăмăн мĕн пур йăвăрлăхĕ те, мĕн пур вăйĕ те пулат" (1934-мĕш çулхи йанварĕн 22-мĕшĕнче тухнă „Литературная газета"-н умстатйинчен).

Ленин теорипе кулĕтурă ыйтăвĕсенче те илейăсен класлă тасалăхĕшĕн çапăçса, ĕлĕкхи кулĕтурăран ниме йурăхсăр, çĕрĕк, кăмăскăланнă кайашшисене сирсе пăрахмалине, çав кулĕтурăран халăхи çапăçăва валли усăлă пултарулăхсене суйласа илмелине пит сисĕмлĕ пĕлнĕ. Халăхи кулĕтурăн етем историнчи иртнĕ кулĕтурăпа çыхăну пуррине Ленин нихçан та манса хăварман, анчах иртнинчен вăл килес ĕмĕрсемшĕн çапăçмали вăрçăра мĕн пулăшма пултарнине кăна сăрхăнтарса илме вĕрентнĕ

Идеалисăмпа пĕр хĕрхенмесĕр çапăçса, тĕрлĕ тĕшмĕше, пуп таврашсен леш тĕнчери пурнăç çинчен вĕрентекен тухатмăш таврашсен йумаххипе çыхăнса тăракан искусствăна Ленин пĕр хĕрхенмесĕр çĕмĕрсе тăкса чăн та чăн искусствăн гаса йалавне çÿлте çĕклесе, ăна вараласран сыхă тăма вĕрентнĕ.

Наукăпа кулĕтурăна ирĕклĕ çул çине кăларасси ĕççыннисемпе тачма тачă çыхăнса тăрсан çеç пуласси çинчен вăл пире вирлĕ ăнлантарса хăварнă. Ăна пролетариатăн революцилĕ интересĕсемпе пĕрлештерсе, капитал пусмăрĕпе експлоатацине салатса тăкса, классене тĕппипех пĕтересси шĕн, коммунисăма тăвассишĕн çапăçсан кăна тумалине вăл ĕнентерÿлĕ ăнлантарнă.

Çапла революцилĕ никĕс çинче кăна наукă, искусствă, литературă малала куçмалин хăвагла сисĕмлĕ вăйĕ те хĕçпăшалĕ пулаççĕ, çапла тунипе кăна вĕсем чăн ирĕке тухаççĕ.

„Искусствă халăхăн пулмала", тевĕ Ленин. Искусствăн хăйĕн тарăн тымарĕсемпе халăх массин сарлака чăтлăхĕнчен сĕткен тургмала. Унăн çав халăх массин сисĕмне, ăсне, ирĕкне пĕрлештерсе çÿлеле çĕклентермеле.

Ленинăн аслă йачĕ халăхи аслă çĕнтерÿлĕ çитĕнÿсемпе, халăхи кулĕтурăпа пĕр татăк сыпăксăр çыхăнса тăрат. Çак çитĕнÿсемпе çĕнтерÿсем Ленинщăн чи чаплă, хаклă асăну, çак çитĕнÿсемпе çĕнтерÿсем унăн идейисене вăл массăсене йертсе пымали принципсене ĕçе кĕртнинче. Акă халĕ пирĕн парти политикин пултарулăхĕпе унăн организацилĕ ĕçĕсем ăнăçĕпе рабочи клас иккĕмĕш пйатилеткăн историлĕ задачисене ĕçе кĕртмешкĕн хăватлăн тытăнчĕ.

„Иккĕмĕш пйатилеткăн политиклă тĕп задачи—капиталисла елеменгсемпе классене тата клас уйрăмлăхĕсемпе çынна çын пусмăрласа тăрассине çуратма пулăшакан сăлтавсене пĕтересси, çынсен економикăпа ăстăнĕнчи капиталисăм йулашкисене çĕнтересси, çĕршыври пĕтĕм ĕçхалăхне классемсĕр социалисăмла обчĕствăн ăнланулăхлă тата хастарлă строителĕсем туса хурасси пулат". (Партин 17-мĕш конференцийĕ).

Çĕнĕ техникăпа çĕнĕ производствăна тавçăрса илнипе халăх хуçалăхне пĕтĕмĕшпех çĕнĕле техникăпа хĕçпăшаллантарса вăйлатнипе çеç иккĕмĕш пйатилеткăн пит катмар задачисене тулгарма пулат. Ку пире çĕнĕ производствăсен мĕнпур програмлă пултарулăхне тавçăрса илме хушат, малта тăракан техникăна йăлтах вĕренсе çигме сĕнет. Кусемсĕр епĕр малала кайаймастпăр.

Иккĕмĕш пйатилеткă ĕçĕсен планĕ, социалисăм çĕршывĕ иртнĕ çулхисенчен те хăватлăрах сарăлса çĕкленессине кăтартат. Промышлĕннăç продукцийĕ вăрçăччен хипе танлаштарсан 1937 çулта тăхăр хут ытла ÿсмеле. Ленинăн нацилĕ политикине тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыни иккĕмĕш пйатилеткăра нацилĕ республиксенче çĕнĕрен промышлĕннăç предприатисем уçса парат. Вăтам Азире, Казакстанра, Инçетри Хĕвелтухăç крайĕнче, Башкиринче тата ытти çĕрте те çĕнĕ металурги савăчĕсем, çĕрмамăкĕнчен пир-авăр тумали хапрăксем уçăлмала. Пирĕн чăваш республикинче те çĕнĕ промышлĕннăçлă предприйатисем пуласси палăрсах тăрат çак пулас строителĕствăсен хи епне Канашри, çулталăкра 6.000 вагон ремонтласа кăларакан савăт та кĕрет.

Ĕççыннин пурнăçне кулĕтурлă тăвассишĕн калама çук пысăк çитĕнÿсем тавассишĕн мĕн таран кĕрешме кирлине планри цыфăрсем хăйсемех кăтартса тăраççĕ. Хуласен пурнăçне илемлĕхпе чиперлентерес ĕçе валли 32 миллиард укçа-тенкĕ çĕнĕрен хумала. Пирĕн Шупашкарта та чаплă советсен дворецне тума тытăнаççĕ. Ку дворец пĕтĕм Горйкки крайĕнче çук илемлĕ пысăк çурт пулмала.

Пирĕн Чăваш республики иртнĕ çура хуçалăхпа политикăлă ĕçсене примерлă вăхăтра туса пынишĕн пĕтĕм Совет Сойузĕнчи хĕрлĕ хăма çине çĕкленчĕ пулсан,—килес çулçенче ăна пур йенчен те кăгартулă республикă тăвассишĕн пирĕн болĕшевикла кĕрешмеле.

Пĕтĕм совет çĕршывĕ капиталисăмăн çĕрĕк ирсĕрлĕхĕнчен тасалнă вăхăтра клас кĕрешĕвĕ вăйсăрланса пымĕ, клас тăшманĕ тĕрлĕ сийен туса вредителĕствăпа саботажпа социалисăм ĕçне чăрмантарма хатланĕ, анчах ăна рабочи клас парти йертсе пынипе, вăл çĕнĕле ĕçлеме вĕрентсе пынипе вăхăтра çапса çĕмĕрсе пырĕ. „Клас кĕрешĕвĕ айалала анакан, сÿнсе пыракан йĕрпе" пĕтсе пырĕ текен сылтăм оппортунисла теорисем ĕçре самоток сĕннипе рабочи класăн çĕнтерÿлĕ ирĕкне çемçетсе пушатма кăна тăрăшаççĕ. Çавăнпа кун пек теорисемпе мĕн пур вăйпа кĕрешмеле, пролетариат диктатурине çирĕплетессишĕн, класлă сыхлăха çĕклессишен пĕрмайах кĕрешмеле.

Çак пысăк ĕçе тумашкăн Кагановичăн тезисĕсем пирĕншĕн çăраççи пулмала. Унăн тезисĕсем пире çĕнĕле ĕçлеме хушаççĕ. Иккĕмĕш пйатилеткăра

хуҫалăхлă политикпе культура ĕҫне тунă ҫĕрте советăн социалисăмлă организатăрĕ чи паллă, чаплă вырăн йышăнса тăмала.

Етемĕн ăнланăвне ҫĕнетсе социалисăмла тăвас ĕҫре, классăр обчĕства тăвас ĕҫре пирĕн совет литературин чи ҫивчĕ хĕҫпăшал пулмала Ҫапла етемсен ăнланăвне улшăнтарса социалисăмла ҫĕнетес ĕҫрен чаплă та пархатарлă ĕҫ урăх пур ши? Ҫак ĕҫе тăвасси—пирĕн литератăрсен умра тăракан задачи.

Каганович йулташăн парти строителствинчи организаци ыйтăвĕсем „кашни коммуниса, кашни колхозницăна, кашни рабочийе, кашни колхозника, специалиса, служăшчине есĕ мĕн тума пултарнине ĕҫпеле кăтарт" теҫҫĕ. („Правда" 1934 ҫ. 2 йанварти умстатйаран).

Ҫак ыйту кашни совет писателĕ умне ҫав тери пысăккан та анлăн тухса тăрат.

„Санăн вĕренес килет пулсан, хăвна хушнă ĕҫе тĕрĕс, тĕппипе, дисциплинăлă тăвас тетĕн пулсан, партипе правителствă хушнине пĕр пăрăнмасăр ĕҫе кӳртес тетĕн пулсан,—санăн умра пирĕн ҫĕршывăн нумай кĕтеслĕ пуйанлăхĕ, санăн умра пит чаплă малалăх" (ҫав умстатйаранах).

Санăн умра тĕнчере ҫук литературăна тăвасси, вăл литературă халиччен курман шухăшсемпе, сисĕмлĕхсемпе, халиччен курман шухăшлăхпа, пултарулă ҫĕнтерӳсемпе чечекленсе ӳсмеле.

Кам чăн та чăн аслă социалисăмла литературă туса ăна сарăлтарас тет,—унăн социалисăм ĕҫне мĕн пур хăйĕн пултарулăхĕпе пулăшмала, унăн Совет ҫĕршывĕн пуҫнăҫне тарăнăн, мĕн пур ăспа тинкерсе вĕренмеле те, милион ĕҫҫыннисен пултарулăхĕн ăшне кĕрсе вĕсен производствине, вĕсен пурнăҫне тĕрĕс кăтартма пĕлмеле.

Кам кахал, найан, ĕҫе ҫийелтен шăйăрттарат, пурнăҫа тирпейсĕр пăхса „сăнаса" анчах иртет—вăл совет литературине сийен кӳме кăна пултарат.

Ку ĕнтĕ кашни писателĕн хăй ҫырнине темиҫе хут виҫсе пăхса, производствăлă совешчанисенче критиксемпе пĕрле тишкĕрсе тухса ăнтарас ĕҫе тытăнма кирлĕ иккенне палăртат.

Капиталисăмла ҫĕршывсенчи економикă ишĕлсе, саланса пырат, выҫлăх тĕввипе вăл ĕҫҫыннисене хупăрласа кĕлмĕҫе кăларат. Пĕр Совет сойузĕнче кăна рабочисемпе колхозниксем пурнăҫне йусаҫҫĕ, хăйсен малали пурнăҫ ҫине шанчăклă ĕметпе вирлĕ пăхаҫҫĕ.

Вĕсем хăйсен партине пур ĕҫре те шанса, партийе йертсе пыракан аслă ҫулпуҫне Сталин йулташа мĕн пур хавaслăхпа йуратса хисеплеҫҫĕ.

Халăхăн ҫĕнтерӳлĕ епосĕ Ленинпа Сталин йулташ йачĕсем таврa нихăҫан ĕмĕрте манми сăвăсемпе поемăсем, калавсемпе романс м туса умри задачăсене ҫĕнтерӳлĕ ĕҫе кĕр ме чĕнет.

Пĕтĕм тĕнчешĕн чаплă историлĕ ĕҫсем социалисăмлă халăхăн чаплă епосне ҫыраҫҫĕ.

**Н. Шупуҫҫынни.**

21—I—34 ҫ.

**Арк Ĕҫхĕл.**

# Хĕллехи салам

Вĕри тăман хăватлă, шухă,
Ҫапат тиркӳсĕр ман пите.
Йурпа пĕрле йейӳлĕ шухăш
Хумханнă ăшăма витет.

Мĕн чул хăват вĕри тăманăн!
Пыратăп епĕ хирĕҫле.
Айга, йурттар, йурттар, тăванăм,
Хирте йур пух ес, хыт ĕҫле!

Тăман чупат, сикет тĕреклĕн,
Мана ывтасшăн йур ăшне;
Анчах, ҫĕнмешкĕн хĕнтерех-мĕн,
Пĕлетпĕр епĕр кĕрешме.

Улах каччийĕ—шиксĕр каччă...
Чĕре шаккат, йун пĕҫерет.
Ҫил ачисем таптайса кайччăр
Кăшт ҫемĕҫсен манăн чĕре.

Савăннипе туйри пек ӳсĕр,
Тăман—хавaслăх ӳсĕртет.
Ҫунат пит-куҫăм килевӳсĕр,
Чупса кĕретĕп ăш пӳрте.

Пӳртре йурлат пин ҫуллă шăрчăк,
Пӳрт тулнă ыйхăпа тăпах.
Ак кӳпнĕ аллăм пăркăч пăрчĕ,
Пӳрт ҫутăлчĕ пин ҫутăпа.

Ăлра хĕвел! Илйич хĕвелĕ!
Хĕвел ҫунат, хыпат чуна.
Йуна мĕскер чарса пĕвелĕ?
Чĕр йунăм йуртăнса ҫунат.

Анне ҫыврат. Ҫывраҫҫĕ пурте.
Мухтав телейлĕ канлĕхе!
Ăш ыйăхпа канайман пӳртĕм,
Мухтав телейлĕ канлĕхе!

Анне ҫыврат. Ун сăнĕ уҫă.
Ҫакна вулатăп сăнĕнче:
„Умра ҫĕкленчĕ ҫĕнĕ шуҫăм!
Умра хĕвеллĕ ҫĕн тĕнче!"

Шăллăм ҫыврат. Курат пуҫ тĕлĕк.
Ун санĕ аслăн йăлкăшат.
Мĕн тĕлленет, ăҫтан еп пĕлĕп?
Ҫапах та паллă ман ăша:

Тĕлĕкĕнче шăллăм—ăстаҫă.
Калат ун сăнĕ—инженер!
Шăллăм ӳсет. Тăманлă каҫăм,
Йепле ха епĕр ĕшенер?

Алра хĕвел! Ман паттăр шăллăм
Мĕскер тĕлленнĕ-ши вара?
Пăшăлтатат вăл аслăн, шăппăн,
Иглесчĕ вирлĕ кăвара!

Паллах, вăл пулĕ чăн ăстаҫă,
Ку ҫăлтăр айакрах та мар.
Тулта сикет тăманлă каҫĕ,
Пӳртре ак—електро кăвар.

Чăваш ачи—кам шухăшланă?
Алра хĕвел... йепле чухлас?
Салам сана коммун пуҫлăмĕш!
Сана—пысăк хăватлă клас!

*А. И. Золотов, Н. Ф. Данилов. Н. Т. Васанка. В. А. Долгов.*

# Илемлӗ литературӑн пайанхи ыйтӑвӗсем

„Организацилӗ ӗҫе политикӑлла руководствӑ ҫӳллӗшӗ тарӑн хӑпартас задачӑ пӗтӗм ыйтӑвӑн ыйтӑкӑшӗпе тухса тӑрать" (Каганович й-ш. доклачӗн тезисӗсем).

Пирӗн халӑхи вӑхӑт—поэзилӗ хастарлӑ кӗрешӳ вӑхӑчӗ. Совет ҫӗршывӗнчи рабочи клас—ӑна пӗтӗм тӗнчери пролетариат пулӑшнипе, унӑн чи революцилӗ, хастарлӑ пайӗ—комунистсен партийӗпе ӑслӑ ҫар пуҫлӑхӗ **Сталин** й-ш йертсе пынипе, вӑл хӑй хыҫҫӑн пӗтӗм ӗҫхалӑхне йертсе пынипе,—Совет ҫӗршывӗнчи рабочи клас пӗтӗм етемлӗх нумай ӗмӗрсем тӑршшӗ ӗмӗтленнӗ ӗмӗте, етемлӗхӗн чи лайах вӗрентекенӗсем сӑнласа кӑтартнӑ пурнӑҫа ӗҫе кӗртсе пырать: классӑр, нимӗнле пусмӑрлӑхсӑр социалисӑмла йӗрке, социалисӑмла обчӗствӑ тӑвать. Социалисӑм халӗ конкретлӑ, куҫ умӗнчи йапала. Ҫак иккӗмӗш пйатилеткӑра епӗр коммунисӑмӑн малтанхи тапхӑрне—социалисӑма туса ҫитермеле. Ҫынсен ӑстӑнӗнче те капиталисӑм йулашкисене ҫӗнтермеле.

Ҫавӑнпа та Совет ҫӗршывӗнче вӑйлӑ индустри тата пӗрлешӳлӗ социалисӑмла шултра йалхуҫалӑхӗ ҫӗкленсе пынипе наукӑ та, искусствӑсем те ҫурхи ытарма ҫук илемлӗ чечексем йешӗрсе ҫӗкленнӗ пек, вӑйлӑн ӳсеҫҫӗ. Фашисланса пыракан патшалӑхсем культурӑ тӗлӗшӗнчен авалхи ӗмӗрсем патне кайала кайса ӳкнӗ вӑхӑтра, Совет ҫӗршывӗнчи темиҫе тӗрлӗ наци ӗҫхалӑхӗсен вӑйлӑ тӑванлӑ ҫемйи пӗтӗм етемлӗх культурине малала гигантлӑ утӑмсемпе илсе пыракан вӑй пулса тӑчӗ.

Ҫавӑнпа та совет илемлӗ литератури искусствӑн ытти пайӗсемпе пӗрле, тӗнчере чи малти вырӑнта тӑракан литературӑ пулса тӑчӗ. Вӑл шутра чӑваш совет литератури те пысӑк утӑмсем туса пырать.

Ҫавӑнпа та Совет ҫӗршывӗн нацилӗ республиксемпе облӑҫӗнче пуринче те—кашни предприйатире, кашни колхозра йалта, шкулта хӑйсен поечӗсемпе хӑйсен ҫамрӑк писателӗсем—социалисӑм тӑвас ӗҫе йурласа сӑвӑлакансем, клас тӑшманне питлесе ҫӗмӗрекен хӗрлӗ ҫамрӑк салтаксем аталанса йешереҫҫӗ.

Анчах социалисӑм тӑвас ӗҫӗн ытти пайӗсемпе танлаштарсан Совет литератури ҫапах та пит те кайа йулса пырать. Кӑна уйрӑмах чӑваш литератури ҫинчен каласс пулать.

Ӗҫри ҫитменлӗхе, киревсӗрлӗхе уҫҫӑн курасран хӑрамала мар. Пачах урӑхла. Ҫӗнтерсе илнӗ ҫитӗнӳсене пурне те уррӑв, пуҫа ҫавӑрӑнтармасӑр шута илсе, ҫитменлӗхсем, киревсӗрлӗхсем ҫине тата ытларах хастарлӑхпа тӑрӑнмала. Вӗсем тымарӗ мӗнӗпех ӑҫтан, мӗнле сӑлтавсем пирки ӳснипе ӳсме пултарнине тӗпчесе пӗлсе, вӗсене ним йулмиччен татӑклӑнах пӗтерме тӑрӑшмала, тата пысӑкрах ҫӗнтерӳсем тӑвасшӑн тата вӑйлӑрах революцилӗхпе кӗрешмеле.

Танлаштарар-ха вырӑссеннипе чӑваш совет литературине, танлаштарса пӑхар-ха вырӑссемпе чӑваш литератӑрӗсен ӗҫӗсене. Шутласа пӑхар-ха чӑваш совет литератури ҫинчен ҫак йенчен. Куҫӑмӑрсене нацилӗ ансӑрлӑх пӗркенчӗкпе витсе тӑмасан епӗр ҫаксене курмала:

Культурӑ тӗлӗшпе пиртен малта пыракан тӑван халӑхсен литературисенче парти Тӗпкомӗ литературӑ ҫинчен йышӑннӑ постановлени хыҫҫӑн ӳсӗм пирӗннинчен шут тӗлӗшӗнчен те, пахалӑх тӗлӗшӗнчен те чылай пысӑкрах. Паллах, вӗсен литературӑ вӑйӗсем те пирӗннинчен чылай пысӑк. Анчах ку факт пире пӗртте хамӑр ҫитменлӗхсемпе йанӑшсене витсе пытарма ирӗк памасть. Литературӑри оппортунистсем ҫеҫ: ку ҫук, вӑл ҫук. вӑйсем ҫитмеҫҫӗ,—тесе усӑ курма пултараҫҫӗ. Вӑйсем ҫитменни, ҫамрӑк вӑйсемпе ҫителӗклӗ ӗҫлеменни, кадӑрсем хатӗрлесси камран килет?

Танлаштарса пӑхар-ха, вырӑс литератӑрӗсем партин 17-мӗш сйесӗпе Совет писателӗсен пӗрремӗш сйесне мӗнле хатӗрленнине. Ку сйес Совет ҫӗршывӗнчи писателсен сйесӗ ҫех пулмасть вӗт. Вӑл сйес пӗтӗм тӗнчери литературӑ ыйтӑвӗсене сӳтсе-йавса, пӗтӗм тӗнчери революцилӗ литературӑна малала ӳстерсе, аталантарса пырас тӗлӗшпе калама ҫук историлӗ пысӑк вырӑн йышӑнмала. Чӑннипех ку тӗлӗшпе те Совет ҫӗршывӗнче рабочи клас тӗнчери пролетариатӑн малта пыракан ударлӑ бригади пулса тӑни уҫҫӑнах курӑнать те малала тата авантарах курӑнса паллӑ пулмала. Ҫапах та чӑваш совет писателӗсем, пуринчен малтан Оргкомитет, ку ӗҫе ҫителеклӗ хака хуман-ха.

Илӗпӗр литературӑри теори ыйтӑвӗсене сӳтсе-йавас ӗҫе, парти Тӗпкомӗн постановленине тӗрӗс ӑнланса, ӑна ҫине тӑрса пурнӑҫа кӗртсе пырас ӗҫе.

Ку тӗлӗшпе ҫитменлӗхсем калама ҫук пысӑк. Петтокин парти организацийӗ тӑрӑ шыв ҫине кӑларса ҫапса ҫӗмӗрнӗ йанӑшӗсем пурсӑмӑршӑн та асрах пулас. Петтоков й-ш кун хыҫҫӑн писателсемпе нумай хут тӗл пулса чӑваш совет литературӗ умӗнче тӑракан задачӑсене ӑнлантарса пачӗ.

Анчах та чӑваш литературинче ӗҫсем пур йенӗпе те малала пӗтӗм вӑйпа кайрӗҫ тесе халӗ те епӗр калама пултараймастпӑр-ха. Йулашки вӑхӑтра паларса ҫитнӗ ӗҫсем йанӑшсемпе ҫитменлӗхсем ҫине уйрӑмах тинкерсе пӑхтараҫҫӗ.

Акӑ ҫакна илер. „Сунталӑн" 1933 ҫулхи 6—7 №-рӗнчи Н. Шупуҫҫыннин умстатйи литературӑ йухӑмӗнчи йулашки вӑхӑтри йанӑшсен тымарӗсене кӑтартас тӗлӗшпе паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать.

Статйа „Критикӑна принциплӑ ҫӳлӗ вырӑна" йатлӑ. Анчах литературӑпа критикӑ ыйтӑвӗсене чӑннипех партилӗхӗн чӑн-чӑн ҫӳлӗ вырӑнне ҫӗклес вырӑнне вӑл вӗсене ним май принципсӗрлӗх лачакине путарать. Теори ыйтӑвӗсене ҫителӗклӗ ҫӳлӗ пусӑмра сӳтсе йавайман тӗлӗшпе вӑл РАПП организацийӗн ҫитменлӗхӗсене ҫӗнерен чӗртет, поли-

тикă тĕлĕшĕнчен калама çук пысăк йăнăш тăват. Çак статйа тухни чăваш литературин организацине йертсе пыракан йулташсенчен те пĕри Тĕпком постановленине ăнланса илейменнине кăтартса парса, литературă организацисен ĕçĕсене тĕпренех, чăннипех çĕнетсе илсе пырас тĕлĕшпе уйрăмах вăйлăн ĕçлеме хушат.

Парти Тĕпкомĕ 1932 çулта апрелĕн 23-мĕшĕнче йышăннă постановленире пуринчен малтан çак икĕ факт хăйсене асра тыттараççĕ: 1) художĕçтвăпа политикă тĕлĕшĕнчен пролетари писатĕлĕсем чылай ӳсни; 2) писатĕл интеллигентсен тĕп масси совет влаçĕ йенне çаврăнни, вĕсем социалисăм тăвас ĕçре активлă хутшăнса ĕçлеме тытăнни. Çавăнпа та Тĕпком хăйĕн постановленийĕпе литературăна малала ӳсме чаракан организацилĕ картасене çĕмĕрчĕ, совет писатĕлĕсен тĕрлĕрен организацийĕсене пĕтерсе, пĕртен-пĕр организаци туса хучĕ.

Анчах писатĕлсен интеллигенцийĕн тĕп масси социалисăм тăвас ĕç йенне çаврăнни литературăра клас кĕрешĕвĕ пĕтнине ним чухлĕ те пĕлтермест. Клас кĕрешĕвĕ пĕтмен, социалисăм тăвас ĕç иккĕмĕш пйатилеткăра çĕнĕ çĕнтерӳсем тунă май, вăл татах та çивĕчленмеле. Револуцийе йышăнмасăр кивĕ çулсем çинче тăракан буржуалă писатĕлсем кăна, тата клас тăшманĕ йенне çаврăннă оппортуниссем çеç Тĕпком постановленийĕ—вăл литературăна клас йенчен тĕпчесе сăнассине пĕтерет,—тесе ăнланма пултараççĕ. Совет литературри малала та буржуалă тата вак-буржуалă туртăмсене, аслă патшалăхла шовинисăма тата контрреволуци çулĕ çине тухса пыракан вырăнти националисăм идейĕсене ним килĕштермесĕр çĕмĕрсе пырсан çеç ăнăçулăн, пысăк çĕнтерӳсемпе ӳсе пыма пултарĕ.

„Сунтал" умстатйин автăрĕ ку чăнлăха пĕтĕмĕшпех маннă пулас. Чăваш литературинчи критиксене ку чăнлăха конкретлă фактсем тăрăх вĕрентес вырăнне вăл „критикăна çӳлĕ, принциплă пырăна" çĕклеме вĕрентекен статйинче ун çинчен рĕр сăмах та каламаст. Пачах урăхла. Гогол тĕслĕхне çителеклĕ тарăн, тĕрĕс ăнланмасăр вăл „Нарспипе" хăйĕн „Пĕтелмей" йатлă калавне критиксенчен хӳтĕлес шутпа йăнăш, буржуалă вывăд тăват: илемлĕ литературăн задачисем публицистикă задачисенчен „тарăнрах та урăхларах" тет, илемлĕ литературăна прикладной наукă тума тăрăшни тĕрĕс мар тет.

Автăр шухăшĕпе, Ленин литературă партилĕхĕ çинчен калани тата литературă—массăсене вĕрентекен вăйлă хатĕр пулса тăни çинчен калани пустуй, тĕрĕс мар сăмах çеç пулса тăрат иккен.

Çапла автăр искусствăн политикă задачисене пĕр-пĕринчен уйăрса, „Искусствă политикăран тухса пырат, „литературăри произведенисем автăрăн идеологипе тачма тачă çыхăнса тăрат тесе каланисен шухăшĕ тĕрĕс маррине куратпăр", тет.

Переверзĕв хăй вăхăтĕнче çакăн пек вĕрентеччĕ:

„Епĕ Достойĕвскин произведенийĕсенче унăн мировозренине, унăн политикăла тата тĕнле ăнланăвĕсене шырама шутлам стăп, мĕншĕн тесен, вĕсене художник çырнисенче шырани—кукăл пĕçерекенрен атă ыйтнипе пĕрех пулаг", тег, вăл.

Йе тата акă вăлах:

„Политикăлă фактсем литературлă фактсене тумаççĕ, литературла фактсем те политикăлă фактсем тумаççĕ".—тет.

Меншевиксен шухăшĕсене саракан Переверзĕв каланă тăрăх: литературă хăй тĕллĕн, политикă хăй тĕллĕн пырат, вĕсем хушшинче нимĕнле çыхăну та çук, литературă политикăран тухмаст.

Н. Шупуççынни те çак шухăшах ĕнтĕ калат.

Статйан тепĕр пысăк йăнăшĕ вăл—диалектиклă материалисăмлă метăд лозунгне, парти ăна мĕнле сăлтавпа критикленине тĕрĕс ăнланмасăр, социалисăмла реалисăм метăдĕнчен те механисла хатĕр туса хума тăрăшни.

Парти РАПП лозунгне, литературă произведенисене диалектиклă-материалисăмлă метăдпа çырмала, тенĕ лозунга мĕнле сăлтавпа критикленĕ-ха? Паллах, вăл лозунга критиклени парти вăл метăла сивленине ним чухлĕ те пĕлтермест. Материалисăмлă диалектикă метăдне парти теори тĕлĕшĕнчен пĕртен пĕр тĕрĕс метăд, тесе шутлат. Анчах вăл метăдпа усă курма пĕмеле. Материалисăмлă диалектикă нихăçан та нимĕнле абстракцилĕ схемăсем те тума хушмаст. Мĕншĕн тесен пурăнăç нихăçан та нимĕнле схемăсене те пĕтĕмĕшпе вырнаçмаст. Мĕншĕн тесен теори хăй те практикăран тухса пырат. Çакăн пирки кирек хăçан та наукăна пурнăçпа, практикăпа тĕрĕслесе малала аталантарса пымала. Çавăнпа материалисăмлă диалектикă пуринчен малтан пурнăçа тĕпчесе вĕренме хушат. Паллă пурнăçа тĕпчесе вĕренессинче наукăна, маркçисăм-ленинисăма, материалисăмлă диалектикăна вĕренни пит те кирлĕ. Анчах, пурнăçа тĕпчесе пĕлни, тĕрĕс ăнланни кунта тĕп вырăнта пулмала.

Писатĕлсене **пуринчен малтан** материалисăмлă диалектикăна вĕрентме тăрăшни çавăнпа вĕсене пурăнăçран уйăрса, пурăнăç патне тĕрлĕрен схемăпа пыма вĕрентни пулнă пулĕччĕ. Тепĕр йенчен револуци йенне тănă, анчах маркçисăм-ленинисăма пĕтĕмĕшпе йышăнса çитеймен писатĕл материалисăмла диалектикă метăчĕпе çырăр, тенĕ лозунга йышăнмасăр та иртме пултарнă.

Çавăнпа парти каларĕ: РАПП лозунгĕ—тĕрĕс мар лозунг; писатĕлсем пуринчен малтан пурăнăçа тĕрĕс сăнаса, тĕпчесе, ăна произведенисенче тĕрĕс сăнласа кăтартмала, терĕ. Çавăнпа парти социалисăмла реалисăм лозунгне пачĕ. Мĕншĕн тесен совет писателĕ социалисăм тăвас ĕçе хутшăнса ĕçлекен писатĕл материалисăмлă диалектикăна кĕнеке тăрăх пĕлмесен те, анчах пурнăçа тĕрĕс сăнлăхласа çырсан, пролетари револуцине усăлă произведенисем пама пултарат. Мĕншĕн тесен пурăнăç малала аталанса пынă май, унăн туртăмлăхĕсем рабочи клас интересĕпе ытларан ытла пĕр пулса пыраççĕ. Анчах кунта çакна манас пулмаст: асăннă процес хăйне-хăй, çтихийăлă пулса пыракан процес мар; ăна халхи пĕртен-пĕр прогреслă вăй пулса тăракан рабочи класпа унăн партийĕ çеç, пурнăçăн туртăмлăхĕсене тĕрĕс ăнланса, вăл туртăмсене социалисăмшăн усăлă кирлĕ çулпа илсе пыраççĕ; ку ĕçе вĕсем пĕр тĕллевлĕн çирĕппĕн организациленсе, кĕрешсе туса пыраççĕ. Совет писатĕлĕн пурнăçăн çак туртăмлăхĕсене тĕрĕс ăнланса, ăна (пурнăçа) пур йенчен те тарăнăн илсе пысăк чăнлăхпа çутатса памала.

Н. В. Гогăл пултарулăхĕн Шупуççынни хăйĕн

статйинче асăннă тапхăрне пирĕн акă йепле ăнланмала:

Гогăль хăй феодалисăмлă патша йĕркишĕн тăнă. Анчах вăл помещиксем ҫинчен тĕрĕс тĕкĕрлесе ҫырни („Ревизор", „Мертвые души") помешиксен класне усăлă пулас выранне кивĕ обчĕстваран ҫуралса тухакан ҫĕнĕ йĕркешĕн усăлăрах пулнă.

Паллă, пурăнăҫа тĕрĕс кăтартса ҫырас ĕҫре маркҫисăм ленинисăма, материалисăмлă тата историкле диалектикăна пĕлни, пролетариатăн социалисăм тăвас политикине чĕререн йышăнни питĕ пысăк выран йышăнса тăрать.

Анчах, „Сунтал" умстатйин автăрĕ ку шухăшсене йышăнмасть. РАПП чухне материалисăмлă диалектикăна механисла схемă тума тăрăшнă пекех вăл социалисăмлă реалисăм лозунгне те схемă пек туса ăнлантарать. „Литературăна социалисăмлă реалисăм ыйтăвĕ (?!) ăшĕнче сĕткенлентерсе кăларма аслă ҫул уҫса памала", тет.

Политикăна, маркҫисăм-ленинисăма пĕлни писатĕл ĕҫĕнче пысăк выран йышăнса тăнине автăр сивлет. „Сăнлăха тăвасси автăр—политикăла вăйлинчен пулмасть", тет. Ку тĕлĕшпе маркҫисăмленинисăма вăл Воронскин тата Переверзĕв йăнăшсемпе пĕр карта лартать.

Статйан виҫҫĕмĕш ҫитменлĕхĕ вăл—литературă произведенисене ҫийелтен ҫеҫ кăштшарăн, пĕрер чĕптĕмĕн иле иле критиклени. Пĕр писатĕлĕн пĕр произведенийĕ ҫинчен пĕр сăмах илет, тепĕр шухăшĕ ҫинчен тепĕр сăмах, иккĕмĕш писатĕл ҫинчен виҫҫĕмĕш сăмах,—тата ытти те. Паллах кун пек критиклесси пит те ҫăмăл. Анчах кун пек критикăн усси ҫук.

Ҫав вăхăтрах Н. Шупуҫҫынни хăйĕн статйинче Краснов-Кĕҫĕнни йеверлĕ „сулахайла" ашкăнакансене хирĕҫмест. Писатĕлĕн пултарулăхне ку тарана ҫитсе те аслашшĕне пăхса хаклама пăрахман ҫынсене, сăмахран каласан —Рзайа, тунă йăнăшсемшĕн те, туманнисемшĕн те тулакан писатĕлсене, вĕсен йăнăшĕсене тишкĕрмест. Паллах, кун пек тунипе вимĕнле тĕрĕс принциплăх, писатĕлсен хушшинче коллективлăх пулма пултараймасть. Пирĕн шутпа, писатĕлсен, Оргкомитетăн та, ĕҫĕнчи ҫитменлĕхсем ҫинчен уҫҫăн каламасăр ҫав ҫитменлĕхсене пĕтерме пур вăйа хурса кĕрешмесĕр чăвашсен илемлĕ литературин малала кайма пултараймасть.

* * *

„Сунталăн" умстатйинчи политикăлă йăнăшсем ăнсăртран пулман. Вĕсем Оргкомитетăн практикăри йăнăшĕсемпе ҫитменлĕхсемпе тачă ҫыхăнса тăраҫҫĕ.

Мĕнле йăнăшсемпе ҫитменлĕхсем-ха вĕсем?

Пĕрремĕшĕ, **самокритикăпа критикă ĕҫне йĕркелĕ**, кирлĕ пек ĕҫклесе, вăйлатса пырас выранне, йăна хупласа тăни.

Литературă произведенисене писатĕлсемпе пĕрле сарлакан сӳтсе-йавасси, тухнă произведенисем ҫинчен унăн лайăх йенĕсемпе ҫитменлĕхсене кăтартса ăнланмала чĕлхепе критиклесси, районри хаҫатсенче темĕн чухлĕшерĕн ӳссе пыракан ҫамрăк писатĕлсен пултарулăхне сăнаса тăрассси, ҫапла вара, писатĕлсене пултарулăх ыйтăвĕсемпе политикăлă ыйтусем тавра мобилизацилесе, чăнчăнах хавасланса, ҫулăмланса ĕҫлеме пулăшасси,—Оргкомитетăн кунран-кун туса тăмалли задачисем пулаҫҫĕ. Анчах, пирĕн телейсĕрлĕхе, Оргкомитет ҫак ĕҫсемпе сахал „аппаланать", ытларах та, произведенисене критиклес ҫеҫ ҫине час-часах: „ес мана ан тив, епĕ те сана тивмĕп" текен, йе: „ес мана ырларăн, епĕ те сана ырлам" текен, йе: есĕ мана „тĕкĕнетĕн", епĕ те сана „ҫаклатса илем", текен „принциплă ҫӳллĕхрен" пăхас практикă палăрса пырать.

Ҫакнашкал условисенче самокритикă ҫинчен, паллах, сăмах сахал пулма пултарать. Ҫакнашкал условисенче ҫеҫ „Йĕрĕкне" критикленине хирĕҫ автăрĕ чи киревсĕр майсемпе кĕрешнĕ йышши, тата мăнкăмăлланса, хăйĕн йăнăш сăввине йусанине „чăтма пултараймасăр, ытти писатĕлсене варалама тăрăшни, „25 массăлă йурă кĕнекине" „Малала утар" йурă сăмахĕсем пирки Шупуҫҫынни „Канаш" хаҫата ҫырнă ҫыру йышши йапаласем ĕрчесе тăма пултараҫҫĕ. Ҫак майпа анчах произведенисем ҫинчен „ҫын урлă" илтнĕ тăрăх каласас йăласем ҫуралса тухма пултараҫҫĕ („Клятва" ҫинчен—вăл чăваш литературин чи пысăк ӳсĕмĕ, вăл Киршонăн „Хлеб" йатлă драминчен ҫӳлте тăрать" тесе „персе йани", „Мучар" пек кирлĕ, лайăх произведенисем ҫине сурма хăтланни, т. ыт те).

Иккĕмĕшĕ—**ҫамрăк писатĕлсем хушшинче начар ĕҫлени**, вĕсен пултарулăхне кунран кун сăнаса тарса пулăшса пымании, вĕсене уйрăм темăсем тавра ĕҫлеме организацилеме, ҫак ĕҫре ҫул кăтартса пыма пĕлменни. Партин XVII-ш конференцинче Ҫ. П. Петров й. пирĕн ҫамрăк писатĕлсем ӳссе пыни ҫине кăтартса, вĕсемпе ĕҫлессине хыттăнах вăйлатмалине палăртса пачĕ. Кунта Оргкомитетăн комсомолпа таччăн ҫыхăнса ĕҫлес пулать. Иртнĕ кĕркунне Обкомол ҫамрăк писатĕлсене пухса, ҫак паха ĕҫе пуҫарса йамали ҫула хывса паначчĕ. Анчах Оргкомитет кун хыҫҫăн ҫамрăк писатĕлсене организацилес ĕҫе вăйлатма шутламарĕ. „Ҫамрăк колхозник" та ҫамрăк писатĕлсене организацилесе, йертсе пырас ĕҫре кирлĕ таран ĕҫлесе тăмасть-ха.

Ҫав вăхăтрах тумали ĕҫсем кунта темĕн чухлех Пултарулăх ĕҫĕнче пулăшасси: темă „тупма", формăпа техникă тĕлĕшпе вĕренсе пыма, пуринчен ытла политикă пĕлӳне, пĕтĕм пĕлӳсене ӳстерсе пыма пулăшасси Оргкомитет умĕнче пит те пысăккăн тăрать. Ҫак пултарулăх ыйтăвĕсене писатĕлсен пуххисенче тăтăшах сӳтсе йавса пымала, „Ҫамрăк колхозникра" ҫутатса тăмала.

Кĕркуннехи канашлура Обкомол, И. Д. Кузнецов сĕннипе „Ҫамрăк колхозника" малтанлăха 10 кун хушшинче те пулин пĕрре пĕтĕмпех илемлĕ литературă произведенисемпе тултарса кăлармала тесе пит паха решени йышăннăччĕ. Анчах „Ҫамрăк колхозник" ҫак решенийе Обкомол ахаљрен ҫеҫ йышăннă тесе шутлать пулас, ку таранччен вăл ҫак тĕлĕшпе питех те начар ĕҫлесе пырать. Районри хаҫатсенче ҫапăнакан писатĕлсен произведенисене тăтăшах тишкĕрсе тăма тытăнас пулать.

Кунпа пĕрлех пирĕн ҫамрăк писатĕлсем хушшинчи ҫитменлĕхсемпе, киревсĕрлĕхсемпе тăтăшах ҫине тăрса кĕрешсе пымала.

Мĕнлескерсем-ха вĕсем, ҫав ҫитменлĕхсем?

Вĕсем—поет писатĕл йачĕпе мăнкăмăлланса, вĕҫсе ҫӳрени, хăйне хăй такамран та асла хуни, ҫавăнпа хăйне нимĕнле критикăна та тивĕҫлĕ мар,

„çветуй“ вырăнне шутлани, çавăнпа хăйĕн пĕлĕвĕсене ÿстерсе аслатассишĕн тăрăшманни. Ку чире пирĕн хĕртнĕ тимĕрпех çунтарса кăлармала. Мĕншĕн тесен вăл пирĕн литературă ÿсĕмĕн çулĕ çинче пысăк чăрмав пулса тăрат̆, вăл писатĕлсене ытла та тăвăр карта ăшĕнче, ытла та пĕчĕк çÿлĕшре, ытла та пысăк ăшăхра пăчланса ларма туртат̆. Пирĕн хăшпĕр çамрăк „пушкинсем“ хăйсен пирвайхи сăввисене çырма пуçласанах „ватă Шупашкар çине сурма“ хапсăнса кармашаççĕ, хăйсене чи аслă çын вырăнне хисеплеме тапратаççĕ, кайат̆ вара çавнашкал „мĕскĕнĕн“ пурнăçĕ айалала хăнтăртаттарса аннăçем анса—нимĕне йурăхсăр пулса тăрасси патне çитиччене. Киревсĕр, тискер вакбуржуалă каппайчăк çак! Пайанхи коллективлă ĕçĕн хавасĕпе савăнăçĕ умĕнче тÿсме пултараймастпăр епĕр çакнашкал анархисла пĕччене ăхе, сапаланчăка.

Оргкомитетăн çамрăк писатĕлсене комунисла вĕрентсе пырас тĕлĕшпе те, вĕсен пултарулăхне хăпартса пырас тĕлĕшпе те тимлесе ĕçлес пулат̆.

Ку тĕлĕшпе йулашки вăхăтра йарса пуснă утăмра та пирĕн, Оргкомитетăн, çитменлĕх пур. **„Малтанхи парне“** сборникĕн умстат̆йинче çак кĕнекесене принциплăх тĕлĕшĕнчен тĕрĕсех хак паманни палăрат̆. (Сăмахран: ку сборникри автăрсен „пăрула сиккелÿ“ таврашĕ пачах çук тени). Виççĕмĕшĕнче, **литературă ĕçне кабинетсенче ларса туме туртăнни.** Вăл—Петтокин партийе хирĕçле „установкисене“ тепĕр хут „теорире“ те çĕнетсе („Сунталăн“ умстат̆йинче литературă задачисене публицистикă задачисенчен уйăрса, пĕр-пĕрне хирĕç тăратни), çакна ĕçре те пурнăçа кĕртсе пыма пуçлани. Сăмах кунта писатĕлсем производствăпа, колхоз пурнăçĕпе, пĕтĕм ĕçхалăхĕпе, партин вĕресе тăракан пурнăçĕпе çыхăнса тăманни çинчен мар, ку тĕлĕшпе пирĕн писатĕлсем чăннипех те калама çук пысăк утăмсем турĕç (писатĕлсем çуракинче, тыр вырнă çĕрте, çулйĕр ĕçĕнче, предприйатисенче, експедицисенче т. ыт. ĕçсене те вăйлăн хутшăнса ĕçлерĕç. Сăмах кунта—Оргкомитет хăй писатĕл массисенчен уйрăлса кайса, чăваш литературине ĕçхалăх массисене кăтартса пама тăрăшманни çинчен пырат̆. Кăçал колхоз уйхирĕсен ударникĕсен, çулйĕр тăвас ĕçри ударниксен чаплă сйесĕсем пулса иртрĕç. Писатĕлсен çак сйессенче вĕресе, çулăмланса çÿремелеччĕ, анчах... писатĕлсен пултарулăхне сарлакан кăтартса пани çак сйессенче пулмарĕ. Писатĕлпе колхозри ударник пĕрле литературă вечĕрĕсем туни пулман.

Литературă ыйтăвĕсем хаљ, пĕтĕм ĕçхалăхĕн хуçалăхĕпе куљтури ÿссе пынă майĕпе, тата иккĕмĕш пйатилеткăра економикăна кĕрсе çынсен ăстăнĕнче те капиталисăм йулашкисене пĕтерес задачă тăнă пирки, пит те малти вырăна тухса тăраççĕ. Çавăнпа рабочисемпе колхозниксем хушшинче, вĕренекенсем хушшинче литературă ыйтăвĕсем пирки докладсем тăвасси, литературă каçĕсем туса тăрасси пит те паллă вырăна тухса пырат̆.

Çак тĕп çитменлĕхсем Оргкомитетăн ĕçне айалала туртса тăраççĕ, пысăк йăнăшсем патне илсе пыраççĕ. Çак çитменлĕхсем Оргкомитетра, „Сунтал“-ра коллективлă ĕçлес вырăнне пĕччен питĕрĕнсе ларса ĕçлесси патне илсе пыраççĕ. Çак йăйăшсемпе çитменлĕхсем пĕтĕм литературă ĕçне кайала туртса тăрăççĕ.

Оргкомитетăн чăваш литературин йухăмĕн ĕçĕсене чăннипех те парти Тĕпкомĕ 1932 çулхи 23-мĕш апрелре йышăннă историлĕ решенире кăтартса панă çулпа çĕнетсе йарас ĕçе бољшевикла тимлĕхпе пурнăçа кĕртсе пымала.

Чăваш республикинчи совет писатĕлĕсен сйесне çак çитменлĕхсене пĕтерсе, пысăк ÿсĕмсем туса тивĕçлĕн хатĕрленер.

---

**Аркади Ĕçхĕл.**

# Кĕçĕн çын

Катари йал вĕçĕ йур айне пытаннă,
Йур айне пытаннă лăпкă шурă пÿрт.
Йалтăр-йалтăр çутă йалкăшат̆ вăтаннăн,
Сив аслашшĕ хыттăн çапрĕ:—пÿрте кÿрт!

Пÿртре уçă йурă шăранат̆ кăварăн,
Çĕвĕçлен машинă йурă кĕвĕлет:
„Комсомолĕца еп тиркесе тăмарăм,
Йепле тиркĕн хÿхĕм, вирлĕ хĕвеле?

„Комсомолĕца еп чĕререн йуратрăм,
Колхозра ĕçчен вăл, паллă бригадир.
Пире шурăмпуçĕ ирсерен йăпатрĕ,
Пирĕ саламларĕ пархатарлă ир.

„Халĕ курăсра вăл, вĕренет ман чунăм,
Еп ăна ваљљи ак шур кĕпе çĕлеп.
Унăн сывлăхне вĕт, çак тĕрре еп суннă,
Уншăнах пуçартăм йурă кĕçĕр еп.

„Комсомолĕца еп тиркесе тăмарăм,
Йепле тиркĕн хÿхĕм, вирлĕ хĕвеле?“
Пÿртре уçă йурă шăранат̆ кăварăн,
Çĕвçĕлен машинă йурă кĕвĕлет.

Пÿртре çутă, çутă! Ех, Иљич хĕвелĕ!
Çутă коммунисăм пĕчĕкçеç пÿртре.
Йурăпа татах та ăшă пÿрт çĕнелĕ,
Кĕçĕн çын йурриЙĕ шăранат̆ хитре.

**29|XII—33 ç.**

---

# Мускавра Ленин патĕнче

1933-мĕш çул. Июлĕ уйăхĕ. Тăрна куçĕ пек кăн-кăвак пĕлĕт чатăрĕ. Тӳпере шăратнă ылтăн пек çап-çутă хĕвел. Умра Кремĕл—тĕнчене кисрентерекен социализм строительствин тĕп штабĕ, Октябĕр тивлечĕпе çĕнĕрен чĕрĕлсе çеçкеленнĕ халăхсен кĕрешӳ йалавĕ, вĕсен çул кăтартакан çутă çăлтăрĕ, çĕнтерне пролетариатăн тĕп хулин чĕрийĕ!

Темле тĕлĕнмеле йухăмран тухса тăнăн туйăнать ватăлса кăвакарнă Кремĕл. Инçетрен, таçтан курăнса ларать вăл хăйĕн паттăр та илемлĕ сăнĕпе Мускав шывĕ хĕрринчи сăрт çинче. Тĕреклĕ, çӳлĕ ватăлса кăвакарнă чул çтенасем хупăрласа тăраççĕ ăна йĕри-таврах. Таçта çӳле, пĕлĕтеле ыткăннă башнясем. Хĕвел çуттипе çуталса ларать мăннăн дворец—правительствă çурчĕ. Çĕнтерне революцин палли—хĕрлĕ йалав çĕнтерӳлĕн çилпе ишет ун çинче, пĕтĕм Кремĕл çинче. Авалхи чиркӳсен ылтăнланă тăррисем тĕксĕмĕн çунаççĕ кăвак пĕлĕтре. Пусмăрлă, ирĕксĕр, патша йĕрки çинчен астутараççĕ вĕсем Совет çыннисене. Çавăн пекех Кремĕл башнисем çинче хăлаçланса ларакан икĕ пуçлă ылтăн ăмăрткайăксем те пĕтнĕ патшан пĕтнĕ кунĕсем çинчен калаççĕ.

Капăран ларать Кремĕл Мускав варринче. Таçтан инçетрен курăнать вăл пăхакана. Айалта, ун çтенисем çумĕпе, çыранĕсене чулпа тумлантарнă Мускав шывĕ хĕрринче пĕр вĕçĕмсĕр йанăраса чупаççĕ вĕр çĕнĕ трамвайсем, çап-çутă, йăлтăркка автомобилсем, пĕр вĕçĕмсĕр иртеççĕ çынсем, çынсем çынсем. Йанăру. Каласа ăнлантарма хĕн пысăк хула шавĕ.

А Кремĕл хăй ларать сăрт çинче, тĕреклĕ çтенасемпе башнясем хӳттинче, пĕр шавсăр, кĕрлевсĕр—паттăрăн та мăннăн...

Кремĕл хапхисем йар уçă. Хапха умĕнче хурал тăракан хĕрлĕ салтаксем умĕпе шалала автомобилсем кĕреççĕ, васкавлăн тухаççĕ çăмăл автомобилсем хуланала. Çăмăллăн шуса иртеççĕ вĕсем çап-çутă асфальт тăрăх сан умăнтах.

Куçпа курман, ăспа çеç туйан ĕç вĕрет Кремĕлте. Çакăнта—мĕн çыраççĕ декретсем, çакăнта—мĕн тытаççĕ йут патшалăхсемпе килĕшӳсем. Çакăнта—мĕн йертсе пыраççĕ революцине Ленин паттăрсем.

Çакăнтан ĕнтĕ, Кремĕлтен, çулăмлă кунсенче йанăранă Владимир Илйичăн тĕнчене кисрентерекен чĕнӳлĕ, хушулă вутлă сăмахĕсем.

— Хăвăрграх, хăвăрграх, çывăхрах чĕрем, Кремĕл çтенисем патне, хĕрлĕ плошчĕте... Владимир Илйич патнеле...

Малтанхи шухăш, малтанхи туртăну çакăнта—Хĕрлĕ плошчĕте, мавзолей патне...

Историлĕ Хĕрлĕ плошчĕт... Икĕ тăраллă мăн хĕрлĕ çурт—Истори музейĕ. Плошчĕт тăршшипех тухса ларнă пĕр йенне Мускав купцисем лартнă суту-илӳ ĕречĕсем —кĕленче тăраллă чул корпуссем, тепĕр вĕçĕнче инçетре нумай тăраллă Василий Блаженный чиркӳвĕпе Мининпа Пожарский паметникĕ. Ку йенче—Кремĕл çтени тулашĕпе лартса тухнă çăка ĕречĕсем. Çакăнтах, Спаски башнă çывăхĕнче Ленин мавзолейĕ.

Хĕрлĕ гранитран, тĕксĕмĕн çуталса тăракан йăвăр чул плитасенчен тунă ăна. Унăн тăрри Кремĕл çтенисенчен çӳлĕрех. Такçан авал йумахри циклопсем тунă пирамидăн туйăнать вăл хăйĕн архитектурипе. Ирĕксĕрех куçсем Хĕрлĕ плошчĕтре мавзолей çине чарăнаççĕ, урасем хăйсемех ун йенне утаççĕ.

Тăрса тухнă черет. Тăсăлнă черет Кремĕлĕн сехетлĕ Спаски башни патнех. Икшерĕн, йĕркеллĕн, хур-кайăк карти пек карталаннă пролетарисем, Ленин патне килнĕ рабочисем, колхозниксем, служащисем. Тăрса тухнă арçынсем, хĕрарăмсем, ача-пăчасем. Тăрса тухнă Кавказ çыннисем. Вăтам Азирен килнĕ чалмалă çынсем, Атăлтан, Уралтан, Çибиртен, тĕрлĕ вак халăх çĕршывĕсенчен килнĕ çынсем. Пурте вĕсем мавзолейе кĕрсе Ленина курасшăн, ун патĕнче пулса, унăн йуратнă сăнне курса социализм строительстви валли çĕнĕ вăй, çĕнĕ кăмăл илесшĕн.

Мавзолей алăкĕ уçă. Алăк умĕнче хисеплĕ хуралта икĕ йенĕпе икĕ хĕрлĕ салтак. Çавăнтах хурал пуçлăхĕ çамрăк командир. Вăл мавзолейа кĕрекенсене икшерĕн тăратса мавзолейе кĕртсе пырать.

Васкамасăр, шăппăн, пĕр шавламасăр кĕретпĕр мавзолейе.

Сулахайала алăк. Пусмасем айалала. Пăрăнатпăр сылтăмала. Çĕнĕрен пусмасем айалала.

Кун çути кĕмест ĕнтĕ кунта. Мачча çинчен пĕр електричествă хунарĕсем çеç çутатаççĕ кунта.

Çул сылтăмала.

Епĕр Ленин выртакан пӳлĕмре.

Хуллен, шăппăн, Ленин çинчен куçа илмесĕр унăн тупăкĕ тавра çавăрăнатпăр.

Владимир Илйич кĕленче тупăкра выртать. Унăн ӳтне емелсемпе емеллесе çĕрмеле мар тунă.

Унăн тупăкĕ хĕрлĕ гранитран тунă тăват кĕтеслĕ пйедестал çинче ларать.

Унăн пуçĕ вĕçĕнче те хисеплĕ хурал.

Ĕмĕрлĕхе куçне хупнă аслă вĕрентекен хăйĕн тупăкĕнче чĕрĕ çын йеверлех выртать. Калăн, лăпкăн çывăрса кайнă вăл. Калăн, пăртак кансан вăл тăрать те хăй патне килнĕ халăхпа чĕррĕн калаçма пуçлать, килнĕ халăха чĕре чухнехи пекех хĕрӳлĕн çĕнĕ сăмахсем калама пуçлать...

Пуçĕ унăн хĕрлĕ çитар çинче. Аллисене хăйне витнĕ пустав çине хунă.

Йешĕл тумĕ çинче, шăп чĕре тĕлĕнче орден.

Куçĕсене хупнă вăл. Унăн пысăк çамки çӳлтен ӳкекен електричествăпа çуталса тăрать. Сарăрах, касса йанă майăхĕ, пĕчĕкрех сарăрах сухалĕ те, унăн характерлă тутисем, палăрса тăракан пит шăммисем те, пĕтĕм унăн кĕлетки чĕррĕнех курăнать.

Аслă революционер, пролетарисен революцине йертсе пыраканĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕн йуратнă аслă вĕрентекенĕ çине вилĕм хăй аллине хума хăйайман.

— Чĕрĕ вăл, чĕрĕ пирĕн йуратнă учителĕ! Ӳчĕпе вăл пиртен уйăрлнă пулсан та, унăн ĕçĕ, вăл вĕрентни пирĕнпе.

Ленин чĕрĕ. Епĕр пурте ĕççыннисем Ленинăн аслă ĕçне туса пыратпăр.

Ленинисам, Ленин ĕçĕ пĕтĕм тĕнчипех çĕнтерсе

# Чăваш болъшевиксен 17-мĕш



**Волков—врач.**
(Йетĕрне болъници).



**Буров йулташ.**
(ПСК(б)П Горйки Крайкомĕн представитĕлĕ).



**Тŭмерăв.**
(Шупашкар).

пырат̌. Авă халĕ унăн нумай мĕлйунлă çарĕсем кăнтăрта та, хĕвеланăçĕнче те, хĕвелтухăçĕнче те тронсене, ĕмĕрхи никĕссене кисрентереççĕ. Ун йалавĕ айне çĕнĕрен çĕнĕ мĕлйунсем хутшăнаççĕ, вĕсем кĕрешĕве кайаççĕ, кĕрешеççĕ... Çĕнтерŭ сан йалаву айăнта... Лăпкă çывăр, Илйич... Санăн ученикŭсем пире ес каланă çулпа йертсе пыраççĕ... Епĕр хăйуллăн та çирĕппĕн çĕнтерŭрен çĕнтерŭве пыратпăр.

Çирĕп чĕре, паттăр кăмăл, болъшевикла пиçлĕх кирлĕ кунта мавзолейра йуратнă учитлĕ тупăкĕ тавра кăмăла хуçмасăр утса тухма. Нумайĕшĕн кунта ирĕксĕрех куçĕсем куççулпе шывланаççĕ, чĕрисем хуйхăпа тулаççĕ.

Хуллен, тупăк çинчен куçа илмесĕр утса тухатпăр Ленин патĕнчен.

Пусмасем çŭлеле, унтан каллех çŭлеле, тепĕр алăкран Хĕрлĕ плошчĕте, Кремĕл çтен исем патне тухатпăр.

Лăпкă ку вырăнта. Хула шавĕ кунтан инçе, вăл инçетрен çеç илтĕнет. Трибунăсем хыçĕнче лăпкăн кашлаççĕ çăкасем. Суту-илŭ ĕречĕсем йенĕпе пĕр сассăр ирте-ирте кайаççĕ автомобилсем.

Плошчĕт салхулă. Чĕрере те хуйхăлă.

Хĕвел çуртсем хыçне сулăннă. Хĕрлĕ .плошчĕт Кремĕл çтенисенчен ŭкнĕ мĕлкепе витĕннĕ, Хĕвел çутти Истори музейĕн ылтăнланă тăрринче тата суту-илŭ ĕречĕсен кĕленчелĕ тăрринче çеç йăлтăртатса çунат̌.

Лăпкă. Пĕтĕм аслă плошчĕт шухăшра. тарăн шухăшра. Пĕр ытлашши хытă сасă та ун шухăшне кансĕрлемест.

Нумайччен тăрат̌ саланмасăр Кремĕл çтенисем çумĕнчи трибунăсем патĕнче Ленин патĕнчен тухнă халăх. Вăл та аслă плошчĕтпе пĕрле шухăш-

# конференцине килнӗ делегатсем

Спиридонов М. С. художник ӳкерчӗкӗсем.



Ваçилйӗв Т.

(Хӗрлӗчутай р.)



Майрин

(Канаш р-нӗ.)

лӑ. Шухӑшлат вӑл акӑ вӗрентекен çинчен, унӑн паттӑр ӗçӗсене астӑват, вӑл вилнӗ хыççӑн вӑл пуçарса йанӑ тӗнчери револуци ӗçӗ ӳссе пынине çӗнӗрен астуса илет...

— Чу! Мӗн сасси ку? Çӳлте пӗлӗтре сасӑ. Мотор сассисем. Сывлӑша çурса, хӗвел çуттипе йӑлтӑртатса плошчӗт урлӑ хурçӑ кайӑксем—йероплансем иртеççӗ. Нумай моторлӑ йероплансем плошчӗтри лӑпкӑлӑха хумхатса йараççӗ. Паттӑрӑн, çивчӗн, хӑйулӑн вӗçсе иртеççӗ вӗсем плошчӗт çинченех...

Чӗре тӗрӗссӗн, уççӑн тапма пуçлат.

Револуци плошчӗтӗ. Пӗрин хыççӑн тепри, пӗр вӗçӗмсӗр, виçшер вагон пӗрле касхи çутӑпа иртеççӗ сан куçу умӗнчех йанӑраса трамвайсем. Урай пек, çап çутӑ асфалт тӑрӑх пӗринчен тепри капӑртарах кӗленчепе те, никкӗлпе те йӑлтӑртатса вӗçӗмсӗр иртеççӗ çӑмӑл автомобилсем. Ахӑраççӗ йӑвӑр, пилӗк тоннӑлӑ грузовиксем. Хӑйсен çутӑ полировкипе те, тӗкӗрлӗ кӗленчисемпе те йӑлтӑр татса çӑмӑллӑн, пӗр сассӑр шуса иртеççӗ, слонтан та çӳлӗ, тата унтан та сарлака 40—50 вырӑнлӑ автобуссем.

Çурхи шыв татса кайнӑ пӗве шывӗ пек плошчӗтеле пӗр вӗçӗмсӗр тапса тӑраççӗ урамсенчен халӑх массисем...

Вӗçӗмсӗр çын, вӗçӗмсӗр шав, йанӑру...

Тапса, вӗресе тӑрат хула, Ленин ӳтне упраса унӑн ӗçӗсене пӗтӗм тӗнчипех саракан хула...

Ывӑнма пӗлмесӗр, кунне касне туймасӑр, çуран та трамвайсемпе те, автобуссемпе те епӗ, чӑваш уйхирӗсемпе чӑваш катисен шӑплӑхӗсен çынни, аслӑ Мускав урамӗсем, плошчӗтӗсем, булварӗсем, рабочисен хулисем тӑрӑх, пйатилеткӑ гиганчӗсем—



Миронова Е. С.

(Çӗмӗрле комбиначӗ).

çĕнĕрен ӳссе ларнă савăтсемпе çĕнĕрен туса лартнă çара хурçăпа кĕленчерен тунă дворецсем умĕпе иртетĕп.

Нумай хутлă, пĕр кĕрхи кунсенчи хура вăрманпа çеç танлаштарма май пур, çуртсен ушкăнĕсем. Хапха пек пысăк чӳречесем. Тӳп-тӳрĕ урам—про çеккă. Асфальт. Хапрăк-савăт трубисем. Мускав шывĕ тăрăх прахутсем. Шăрçа пек çутă електричество фонарĕсен чуппи. Театăрсем, Музейсем.. Çĕре чавассĕ машинсемпе шавлан урам айĕнче. Метрополитен тăвассĕ... Çăкасем, каврăç йăвăççисем шавлассĕ скверсенче. Çуртсен çумепе акса тунă курăксен симĕс ковирĕ... Памĕтниксем... Историлĕ çуртсем, урамсем...

Халăх... Халăх.. Вĕçĕмсĕр халăх... Кĕрлев... Шав... Йанăру... Електричество тинĕсĕ...

Пурнăç вĕрет, гейзертан çӳлеле тапакан шыв таппи пек вăл паттăр та илемлĕ, савăнăçлă та çутă, чечеклĕ...

Умра Кремĕл—тĕнчене кисрентерекен социализăм строительствин тĕп штабĕ, Октăбĕр тивлечĕпе Ленин генийĕпе чĕрĕлсе çеçкеленнĕ халăхсен кĕрешӳ йалавĕ, вĕсене çул кăтартакан çутă çăлтăрĕ çĕнтернĕ пролетариатăн тĕп хулин чĕрийĕ!

Историлĕ Хĕрлĕ площчĕт. Йĕкĕреш тăрăллă çурт—Истори музейĕ. Суту-илӳ ĕречĕсем. Мининпа Пожарски аваллăхĕ. Кремĕл çтенисем умĕпе çăкасем. Башня.

Мавзолей.
Кунта—Ленин.
Кунта—çĕнтерӳ.
Кунта—Сталин!

Мускав, 1933-мĕш çул.

Иванђун Вашки

# Йанвар каçĕ

Хĕл каçĕ пысăк шухăшра,
Тем асăнаť каçхи йанвар.
Йĕрет сив çилĕ хушăран...
Хĕл каçĕ пысăк шухăшра...
Темме чуна пит аван мар.

Тӳпе пит тарăн, тĕпсĕрех,
Тӳпе мăн хуйăх ăшĕнче
Мĕлйун куçпа ăйха сирет.
Тӳпе пит тарăн, тĕпсĕрех,
Шăнаť пӳђ уйăх ун çинче.

Тавралăх унăн çуттивче
Саплах пĕр хуйăх пытараť.
Йурпа пусараннă тĕнче
Пайан çаќ уйăх çуттинче
Пуç тайнă пек тăраť, тăраť...

Пăхсан çӳле çăлтăр нумай,
Кашни куççул шăрçийĕ пек,
Хăйсем кичемлĕн пăхнă май...
Пăхсан çӳле—çăлтăр нумай
Салхулă пĕлĕт çийĕпе.

Вĕрет сив çилĕ, çил йĕрет,
Таçтан çитет тăлăх сасси,
Тăман хупласшăн çулйĕре...
Вĕрет сив çилĕ, çил йĕрет,—
—„Илйич... Илйич...—“ тет çил касси.

. . . . . . . . . . . . . . . .

Кам пĕлмĕ, пĕлмĕ кӳ каçа,
Кама чуна витмен ку каç!
Ак вунă çул урлах каçса
Кам пĕлмĕ, манĕ ку каçа—
Манмасť ĕçхалăхĕ нихçан.

Йанварĕн çирĕмпĕррĕмĕш...
Тухса тăраť хура сăнпа.
... Ах, йăвăр, йăвăр чĕреме...
Йанварĕн çирĕм пĕррĕмĕш...
Йепле пăрахăн асăнма?!

Пайан чи аслă аттене
Хăрушă вилĕм илнĕ каç.
Хăрушă.. Ленин çук текех...
Пайан чи аслă аттене
Çухатнăçке ĕмĕрлĕхе...

Çампа салху каçхи йанвар,—
Йĕрет пек тупăк умĕнче...
Асмашкăн вăхăт пайан мар...
Салху, салху каçхи йанвар,
Хыпса çунаť каçхи тĕнче...

... Çук, çук йĕмест пайан çĕршыв—
Илйич вăл чĕрĕ, çул умрах.
Çаплах сирĕлет тăшман шăрши...
Çаплах йалавлă ку çĕршыв—
Илйич хыптарнă çулăмра.

Ес, Ленин, чĕрĕ вĕт пайан—
Çук вилмĕ, вилмĕ санăн йат.
Сан йат пĕртен-пĕр çут майак!..
Ес, Ленин, чĕрĕ вĕт пайан—
Тĕнче сана пуçа тайаť.

Çĕршыв чĕри вăл сан чĕре,
Мĕлйун чĕри ун пек тапаť
Турбинă майăн тĕнчере.
Çĕршыв чĕри—вăл сан чĕре—
Çавраť вăйхаллă етапа.

Вĕри кунçулăн варрипе
Йĕртен пире пур çĕр çинче.
Çĕнтерӳсен кăварĕпе,
Вĕри кунçулăн варрипе
Çиçетпĕр епĕр пур йенчен.

Кĕтсе илетпĕр çулсене
Çĕнрен-çĕн Днепростройпала.
Ик пилĕкçуллăх вăй сĕнет,
Кĕтсе илетпĕр çулсене
Мухтав ĕç йурripe йалан.

Ку пурте паллă хаљ сана,
Туйан пире, Илйич атте!..
Мĕскер ударник ăмсанаť?—
Ку пурте паллă хаљ сана...
Бригадă чакмĕ нимĕнтен.

Епир мĕлйунлă ĕççынни—
Хулан, тырпулă колхозран.
Ĕç тĕнчине телей, çĕнни...
Епир мĕлйунлă ĕççынни
Санах, санах усрар асра...

Йалав пек маншăн сан сăмах—
Мала кăтартнă пĕр тĕллев.
Çампа каратăп сассăма..
Йалав пек маншăн сан сăмах:
—Кĕрешмеле!.. Вĕренмеле!..

Илйич! Илйич! вилми çулпуç,
Йату компартири хăват,
Йату сӳнми вулкан çăлкуç...
Илйич! Илйич вилми çулпуç
Санпах комунă çул хăваť...

Виктăр Гусěв.

# Вунăçуллăх.

(Вырăсларан куçарнă).

Епěр вунпилěк çулхи ачасем.
Макăрнă епěр, куççуль пытармасăр.
Çĕтĕлнĕ çĕлĕксене хыва хыва
Утнă, хĕл сиввине уйăмасăр.
Ачасем!
Вăрçман епěр вилěмлě çапăçура.
Восстанипе Тверски кěрленě вăхăтра,
Асатрăмăр епěр капиталисăма,
Хут çĕлене тўпери уçлăха йанипе.
Çĕрçуллăхсене тĕпрен кисрентерсе,
Тăшманпа çапăçса, тăшмана çĕнтерсе,
Республик чухăн татăкпа апатланнă.
Анчах Совнарком пуçлăхě
Кĕрлев варринче,
Сирпĕнен вутлă хĕм хушшинчех
Пирĕн çинчен, ачасемшĕн,
Малаллăх пирки шухăшланă.
Халь ĕнтĕ унчухне хĕстерен хĕн-хура
Пайанхи тантăшсем пĕлеймеççĕ.
Вăрçăсем пĕтнĕçемĕн,
Вăрçăсем вырăнне, чăн малтан,
шкулсем уçăлаççĕ.
Ачасем!
Каçхи тĕтрере, Колоннăйпала угнă майăн,
Йулашки сехетре епěр йĕнĕ.
Илйич!
Вăл пирĕншĕн ачаран, малали
Пурнаçа чечеклен паллă пулнă.
Ак вăл выртаччĕ,
Ĕнереччĕ хорсенче çинçе хĕлĕх
Çав тери хуйхăпа найкăшса.
Вара
шăплăх,
шăплăх та
шăплăх—
Тĕксĕм пĕлĕт те тĕтĕм йеврĕлĕ
Шуса иртрĕ тĕнче çийĕпе.
Анчах çак чĕмсĕрлĕх, çак хуйхă витĕр,
Оркестăран шăппăн йĕрен кĕвви витĕр,
Çĕршывпа аслă сйесăн трибунĕ çине
Ухатăн Илйич тусĕ, Сталин Иосиф
Хуйхăпа тăвăнса, çапăçма хатĕрскер.
Вăл пирĕн салхулă хирсем тăрăх пăхрĕ,
Çĕр чăмри вихăçан илтеймен тупапа
Малашне çапăçма тупа турĕ.
Çак тупа Кузнецкри вĕр çĕн хурçă йăлтрийĕн,
Тĕнче баригачĕн пĕр харăс перен туп сассийĕн,
Кив планетă çийпе вĕççе карĕ,
Ун çийпе аслатийĕн кĕрлерĕ.
Çак сасра, çĕнтерӳ, çапăçу планĕсен ăшĕнчен,
Пирĕн умма çĕнĕрен çĕкленсе тухрĕ Ленин.
Тухрĕ пурнăç тĕшши, унăн темпĕ,
Тата тухрĕ, хăй чухнехийĕн—унăн çирĕп тĕллевĕ.
Философсем йĕнĕ, ĕлĕк-авалтан:
Пурнăç вăл—самант çеç,
Кăлăхах харсăрлу,
Етем—метеор—йеврĕлех, çиççе илĕ те сӳнĕ,
Тĕнчене çĕнĕрен сăн-сăпат параймасăр.
Вăнă çул шавларĕç вĕсем—пĕр самант!
Çĕнтерӳлĕн вĕлкĕшеç ак пирĕн йалавсем.
Тĕнче уçлăхнĕ—пĕлейместĕп,
Анчах тĕнчене
Урăхлатрăмăр епĕр.
Çавнашкал инçете йарса пусрăмăр епĕр,
Çавнашкал ĕçсене тытса турăмăр,
Вĕренме анчах мар,
Пĕлӳврен
Магнитка,
Кузнецка, Днепрострой
Шăратса хывса лартрăмăр епĕр.
Пăхăр—
Комбайнăсем ак пухаç сап-сар ылттăн тырра.
Сар хĕвелĕн çап çут пайракийĕн шăватăн самолёт.
Кашни хурçă мотор ăшĕнчех кĕр-кĕрлет
Сталин йулташ Илйичă тупа тунă сас вăйĕ.
Чăн! Епĕр улшăнтарăпăр планетă сăнне,
Çĕре тĕтререн туртса кăларăпăр епĕр.
Ахаль мар пирĕн çинчен йан-йанрарĕ мухтав
Лăпкă Дон хĕррипчен пуçласа
Лăпкă тăр океанăм патне çитиччен.
Анчах пайан кун та çаплах хурланатпăр,
Иртнĕ хуйăх ытамларĕ пире.
Мĕн пур тĕнчери композиторсен вăйĕ
Кĕвелеймĕ пирти хуйăха.
Салхулă колоннăн, пĕр ретĕн тăрса
Тек утатпăр епир малала,
Хуйхă пусатăн те, пусатăн вăйлăрах.
Вĕт пайан пирĕн хаклă Илйич
Утмăл тăваттă çине çеç пусаччĕ.
Пăхса илеччĕ пирĕн йуратнă старик,
Пирĕн çине пăхса илеччĕ вăл.
Куç хĕссе пăхнипе, пирĕн ĕçе курсанах,
Пире савĕччĕ мухтăччĕ вăл.
Анчах çил кĕр-кĕрлет,
Тăратăн мавзолей,
Ун çийпе тӳпере ыткăнатăн самолёт.
Çĕршывăм! Ес сарăлатăн, йалан вăй илен,
Нумай ĕлĕкхи çăлтăра тĕксĕмлетрĕн халь есĕ.
Каллех Илйич тусĕ, Сталин йулташ
Ухатăн тĕнчепе сйез трибунĕ çине.
Вăл калĕ: епĕр турăмăр нумай сирĕнпе,
Анчах ку пирĕн пирвайхи утăм çеç-ха.
Унтан вăл пире çавнашкал çул кăтартĕ,—
Курайман тăшмансем тискер кайăкăн улĕç.
Çĕрĕн ӳчĕ çинче кӳпчеççĕ вăрçăсем,
Империсем вутпа тĕттĕм ăшне ыткăнаççĕ.
Мĕншĕн-ха епĕр лăпкă?
Мĕншĕн шикленместпĕр епĕр тăшманран?
Мĕншĕн тесен, хамăр тĕллеве епĕр пĕлетпĕр.
Мĕншĕн тесен, тăшмана салатма пултаратпăр.
Мĕншĕн тесен Ленин çинчен каласни вăл—
Сталин çинчен каласнийĕ пулатăн-тăр.

# Ал-р Каттайпа Вашки сăввисем

*Каттай хаљ кăна ÿссе аталанакан поетсенчен пĕри. Вăл хаљхи вăхăтра Шупашкарти Музăкпа театăр техникумĕнче вĕренет. 1924-мĕш çулччен беспризорник. Ку сăвăсене вулакансене Каттай пултарулăхĕпе паллаштарас шухăшпа пичетлетпĕр. Ку сăвăсем Каттайăн тин çеç çырма тытăннă чухнехисем. Хаљ вăл, нумайах пулмасть „Канаш" хаçатра пысăк йапала, „Ишек" йатлă сăвăлă очĕрк пичетлесе кăларчĕ.*

*Иваньук Вашки те Каттайпа пĕрлех вĕренет. Музăкпа театр техникумне кĕричченех вăл Куславка р-чи Йелчĕк КÇШ-че вĕреннĕ, Корич литкружокĕнче ĕçленĕ. Хăй вăл, Куславка районĕнчи Куснар йалĕнче çуралса çитĕннĕ.*

*Малашне вулакансене ытти çамрăк поетсен пултарулăхĕсемпе те паллаштарма шухăшлатпăр.*

**Ал. Каттай.**

## Çурхи кĕвĕсенчен

* * *



Ал Каттай.

Сар хĕвелĕ, пĕçертме пуçларĕ,
Сĕлкĕшлет салхуллăн шурă йур.
Кам пайан, пÿртре ак чăтса ларĕ,
Йăхăрать пире хаљ çурхи тул.

Шăнкăр-шăнкăр, сасăлан йăр шывĕ
Лапсенче йухать ав тăп тулса.
Иртрĕ, иртрĕ, хĕлле урнă сивĕ
Иртсе кайрĕ сивĕ хурланса.

Шĕлтĕр-шĕлтĕр, иртенпех çĕн трийĕр
Ампарта ларать тыр сăвăрса.
Чĕвĕл-чĕвĕл, ачасен сассийĕ...
Ачасем суртлаççĕ çавăрса.

Çурхи кунĕ лăпкă, уçă, тăрă,
Хĕвелпе çу йевĕр ирĕлет.
Ирĕк йуррăм, йухăн уй-хир тăрăх,
Йухăн, йухăн, есĕ, хиреле.

Тăван хирĕм, анлă та пит аслă,
„Фордзонсем" сĕвеç хура çĕре.
Пайан епĕ, ирĕк, уçă саслăн
Парнелесшĕн йурă уй-хире.

Ех, йепле, илемлĕ çурхи ирĕк,
Вăрлăха çапать ак çĕн машин.
Чăнахах çĕнелчĕ вĕт уй-хирĕм!...
Машинпа туслашнă хаљ кашни,

Чăнкăр-чăнкăр, хыçалтан сÿрийĕ,
Вĕтетсе пырать ав тăпрана.
Сывлăшра йарнатĕ—ĕç йуррийĕ...
Хускатса йарать вăл таврана.

## Йешĕл улăхра.

Шĕнтĕ улăх йешĕл аслă
Çилпелен ак хумханать,
Кунта ĕç хĕрет хаваслăн,
Колхоз ĕç вăйпа ăнать.

Çырли хĕрлĕ шерепелĕ...
Çулçипе выљать хăва.
Кунĕпе кĕрлет проппелĕр
Пĕрхĕнет çĕн вăй-хăват.

Ех, ман тантăш пит те паттăр,
Йарăнса çулать пайан:
— Йашсемпе пĕр ăмăртатпăр
Кунта халĕ çук пайан —

Шурă хурăн. кăтра çӳçлĕ,
Çамрăка пуçне тайать.
Уç йурра халь ăшă çилĕ
Айайакка илсе кайать.

* * *

Кăн-кăваккăн уçăлчĕ
Çут тĕнче чаршавĕ,
Лăпкă çут-çанталăк
Йанкăрах уйар.

Ир, ирех пуçланчĕ
Колхоз ĕçĕн шавĕ...
Еп те чупса тухрăм
Ĕçлеме уйа.

Çӳлĕ те пит аслă
Хура сĕм вăрманĕ...
Çавра çутă кӳлĕ,
Лапам та çаран.

Шĕнтĕртех*) вĕт авă,
Çавăрнать арманĕ;
Ăна колхоз тунă,
Вăл çĕнĕ арман.

Ех, йепле чечеклĕн
Йешĕрнĕ çак улăх!
Йепле ак пуплетĕ
Çтаппан пуç**),—тăмсай.

Катаран курнать ак,
Сар пучахлă тулă...
Ăн ахаль çуласçĕ...
Ĕç пырать ăнсах.

Симĕс пуçлă клевĕр
Йепле, шерепелĕ...
Ăш çилĕ йуратнă
Ачашшăн лăпкать.

Кунта халь кĕрлет,
Кĕр-кĕрлет проппелĕр!
Ĕçри уçă йурă
Йарăнать сăпкан.

Кунĕ лăпкăланчĕ,
Хĕвел пиçсе çитрĕ,
Шевле каçсенчи пек
Çиçеç çавасем.

Йаш та çамрăк пĕвĕм
Мана ĕçпе çыхрĕ.
Еп те çава тытрăм—
Выљанаç алсем.

1933 ç

---

*) Щĕнтĕр—йухан шыв йачĕ.

**) Çтаппан пуç—курăк йачĕ.

**Иваљук Вашки.**

## Хĕр—агронома

Еп пĕлеп—савать сана пахча.
Хир сана, тăван пек алă панă...
Тусăм, тусăм, иккĕн чух, тахçан:
— Ех, „колхоз" текен сăмахчĕ манăн.

Ĕмĕт çитрĕ, чашкăрчĕ кăна...
Хамăрах колхоз пăхса ӳстерчĕ.
Тухрăн та вĕт, ес, агронома,
Халь ăçта сан иртнĕ кунсен терчĕ?

Йешĕрен колхозăн пахчинче,
Еп сисеп, йала аса илетĕн.
Иртнĕ тăлăх пурăнăç çинчен...
Тарçăри асаплă кунсене те.

Сан умра пайан çап-çутă кун,
Сар хĕвел те пиреншĕн пăхать-тĕр.
Ак, çĕн хир йепле хитре-ха ку,
Ес ăна чунна пама та хатĕр.

Каспала уйа тухса тăран,
Илĕртет тырпул сана ахаль-и?
Сан сĕнӳ пек акнă ку тырра
„Ним сапман" тесе, ăна кам калĕ.

Йе ирпе, йăран хушшипеле
Çимĕçе пăха-пăха иртетн-и?
Вĕт колхоз сан сĕнӳпелех
Ку таран пуйан пахча ĕрчетнĕ,

Сан ĕçӳ—çунан кăвар инçет,
Халь правлени, йе йачейккă чĕнчи?
Ес вĕрентнĕ хĕр те руљ çинче—
Ун лаши уйри ĕçре кĕçенчĕ.

## Итем çинче

Тӳнкĕр-тӳнкĕр... тӳнкĕр-тӳнкĕр!...—
Сас йухать, йухать инçе
Сарлака итем çинче.
Ех, капанĕ пĕр кĕтӳ-çке,
Тăсăлаççĕ темиçен,
ик йенчен.

Сарăм мар пайан итемĕн,
Çук, пайан йăлт урăхла,
Савăнса машин ухлать...
Кĕлтине те тавăр темĕн,
Çук, пайан йăлт урăхла,—
хапрăкла...

Ку сăртран чылай айалăн
Йалăм саралнă çумма.
Хурçă ĕç кĕвви чупать...
Ех, итлет йамралă йалăм,
Чăтаймасăр ал çупать
вăл çампа.

Миçе пăт çапать-ши тырă
Ку бригадăмсăм пайан—
Тĕрмешсе мĕн пур вăйран?
Машинпа ăçтан-ха ырăн,
Ун ĕçнех пуçа тайан,
ес пайан.

Тӳнкĕр-тӳнкĕр... тӳнкĕр-тӳнкĕр!..—
Сас йухать, йухать инçе
Сарлака итем çинче.
Ех капанĕ пĕр кĕтӳ-çке,
Тăсăлаççĕ темиçен,
ик йенчен.


Чăваш большевиксен 17 мĕшĕ
ПРОЛЕТАРСКИЙ ПРИВЕТ
17

# конференцийе

„..Револуциччен чăваш çĕршывĕ—трахомлăскер, хута пĕлменскер, кулътурсăрскер, хĕрӑтса пĕтернĕскер—пĕтсе пырас çулпа пынă. Хуласенче нимĕнле промышлĕннăç та пулман. Йалта кулакпа выçлăх пуç пулса тăнă.

Халĕ çак чăваш çĕршывĕ колхозла çĕршыв пулса тăчĕ, промышлĕннăç ÿсет, нацилĕ кадăрсем хатĕрленсе пыраççĕ. Чăваш ĕççыннисен хăйсен нацилĕ патшалăхлăхĕ пур. Колхозри хресченсем вăтамсен виçине çитсе, пуйан та кулътурлă пурнăç çулĕ çине тăчĕç. Хутла пĕлменлĕхе пĕтернĕ, кулътурă тĕлĕшпе пысăк ĕç анлăн сарнă“ (Петров Ç. П. йулташ Партин Облăçри 17-мĕш конференцине уçнă чухне каланă сăмахран).







(Калав)

Тăвлă çул Шилкка хĕрнеле çывхарнăçемĕн ансăрланчĕ. Çулăн икĕ айаккинчи çатрака йăвăçсемпе хăва тĕмисем курăнкалама пуçларĕç. Шилкка хĕррипе, 5—6 çухрăма тăсăлса выртакан ката урлă пĕр пысăк чиркÿлĕ йал курăнса ларат̆. Çырма хĕрне шăварма хуса аннă ĕне кĕтĕвĕ пек пĕр вĕçĕпе Шилккана перĕнсе тăрат̆. Çурчĕсем ту айаккипе уйри суратсем пек сапаланса лараççĕ.

Партизансем:—„васкамасăр утсан та хĕвел аничен йала çитетпĕр“ тесе, пĕр-пĕринпе калаçкаласа ансăр çулпа ката варнеле утрĕç. Сăрт тÿпинчи çунтарса йарас пек кунĕпе хĕртнĕ хĕвел хыççăн, темиçе ытам çитми чăрăшпа кедăр йăвăçĕсем айĕнчи сулхăн пурне те вăй пачĕ. Вĕсем хавасланса ирхинерехпе мĕн курни-илтни çинчен пĕр-пĕринпе калаçса, сÿтсе йавма пуçларĕç.—Колчакпа Çеменăв вăрă-хурахсене Çибиртен хуса кăлармасăр киле таврăнассăм çук,—терĕ пĕр 60 çулхи кăвак сухаллă мучи, карапинне тепĕр хулĕ çине куçарса çакса.

— Тен, Шилккапа Аркун шывĕсен кукрине хăваласа кÿртекен йултăшсене çитсе хăтаричченех хайар тăшман учĕ таптаса вĕлерĕ... Мĕн пулсан та, пĕртен-пĕр ывăлăма часрах курасчĕ, кайран вара вилсен те тарам,—терĕ вăл.

— Вилесси çинчен йаланах ан асăн-ха, ес, Куртей мучи,—пÿлчĕ йунашар утса пыракан çамрăк.

— Ултă пин çухрăм килсен те вилменнине, тен, киле те сывах таврăнатпăр-ха. Хĕлипе ак ыранах куратпăр. Каçхине, тăватçĕр çын, систермесĕр шуррисене хыçалтан пырса вуникĕ пулеметран шăтăртаттарма тытăнсан, пĕр самантра пăтратса йарăпăр. Тата Журавльовĕ*) те хăравçăсенченех мар. Тăшмана тылран чĕпĕтнине сиссен, хăйĕн çарĕпе часах пирĕн йенне шăтарса тухĕ. Вара тинех вăл господасене раксем ăçта хĕл каçнине кăтартăпăр,—терĕ ăна хирĕç, хăйпе йунашар утса пыракан пĕр çамрăкскер.

— Иртерех çунатланатăн, ачам. Вăн, разведкă пĕлтернĕ тăрăх, кăнтăрла тĕлĕнче пиртен виçĕ çухрăма тăрса йулнă Нагорнăй йалĕнче те хăйсен отретĕнчен кайа йулнă шуррисен чаçĕсем пулнă тет. Йултăшсене çитсе пулăшиччен çавсем те чăрмантарма пултараççĕ. Вĕсем партизансене икĕ шыв кукрине хупăрлама плэн тунă, хăйсен çарне пирĕн çирен пĕлтерсен пирĕн ĕç пĕтĕмпе те пĕтме пултарат̆. Тата Шилкка леш йенчи ту çинче крепăçре тăракан Йапуњ çарĕнчен те сыхланас пулат̆. Вĕсем асăрхасран пирĕн пĕрмайах Шилкка хĕрринчи айлăмпа пымала.

Сукмак ансăрланнипе Куртей мучи çамрăк партизана хăй умне иртерчĕ. Сукмак икĕ айаккинчĕ кедăрпа чăрăш йăвăçсем вырăнне каллех вĕт хăва тĕмисемпе хурăнсем курăна пуçларĕç. Сайран курăнса ларакан имшер йăвăçсем айĕнчи шурлăхра уйри ыраш пек çÿлĕ хăмăш кашласа ларат̆. Хушăран çап-çутă кÿлĕ йейĕлсе выртат̆. Тĕкĕр пек тикĕс лăпкă çийĕпе йарăнса çÿрекен кайăк-кăвакалсем çынсене курсан, пĕр самантра хăмăшсем тĕпне тара-тара пытанаççĕ. Партизансем иртсе кайиччен кÿлĕ çине пĕр чĕрĕ чун та хăйса йухса тухмаст̆.

Ката варне пĕр çухрăм пек кĕрсен, партизансем умĕнче пĕр пысăк мар уçланкă курăнса кайрĕ. Сарлакăшĕпе тăршĕ пĕр 40—50 хăлаçран та ытла мар. Ура айĕнчи мăк пек йавăнса выртакан çăра курăк кунĕпе утса ывăннă партизансене илĕртнĕ пек курăнса тăрат̆.

Сулахай йенче, уçланкăран 5—6 хăлаçра хурăнсемпе йĕлме йăвăçĕсем хушшипе Шилкка курăнса выртат̆. Вăл хытă йухнипе сăрт хушшинчи чулсем çийĕпе шуса пыракан хура çĕлен пек, хуран симĕсĕн йалтăртатса авкаланат̆.

Сасартăк хĕвелтухăç йенче пĕр тупă сасси сывлăша кисретрĕ. Унтан темиçе ĕмĕр тăршшĕ шухăша кайса чăрăнми карласа ларакан тайга ăшĕнчи выçă кашкăрсем айакран пĕрне-пĕри уласа сасă панă пек, Манчжури граници йенчен тепĕр тупă сасси кĕрĕслетрĕ. Тепĕр пилĕк минутран малта пĕр йĕркесĕр пеме пуçларĕç. Тĕрлĕрен виçелĕ тупă сассисем, пулеметсем шăтăртатнисем ытти сасăсене хупласа хучĕç.

— Партизансем ката варринчен хăвăртрах тухса йала çитес тесе васкаса утрĕç.

— Пур йенчен те пĕр тăрук хупăрласа партизансен тĕп вăйне шыва путарасшăн ĕнтĕ вĕсем, терĕ тарăн шухăша кайса чылайччен пĕр чĕнмесĕр пынă отрет командирĕ Чукмар.—Вăхăтра çитсе пулăшмасан хамăра та ырах пулмĕ,—терĕ вăлах.

Çул çинче чăрмав пулмасан вăхăтра çитессишĕн ан хăрар,—хирĕçлерĕ Куртей мучи, çамрăк партизансемпе пĕрле пăтваррăн утса.

— Тĕрĕс, йултăшсем! Пурин те пĕрремĕш пулнишĕн калама çук хавасланатăп,—терĕ те Чукмар, карапинне аллине илсе отрет умнеле çамрăк ача пек çăмăллăн уткăнчĕ. Уçланкă хĕрне çитсен малта пыракан çамрăк партизансем сасартăк чăрăнчĕç. Уçланкă хĕррипе лачака саралса выртат̆.

*) Çĕпĕрте пулнă темиçе пин çынлă партизансен çарĕн командирĕ.

— Йăнăш çул çине лекрĕмĕр. Катан çулĕ хĕррипех каймала пулнă мĕн,—терĕ Чукмар, тӳшек пек çемçе курăк çине куклексе ларса.

— Разведкă йалти хыпарсене пĕлсе таврăниччен каннишĕн нимĕнех те пулмĕ!—терĕ вăл.

Ун хыççăн ытти партизансем те пĕрин хыççăн тепри тутлă шăршăлă курăк çине выртса тухрĕç. Кунĕпе утса ывăннă хыççăн, йешĕл курăк çинче килленсе выртма ытла та ырăçке.

Анакан хĕвел Шилкка леш йенчи йапунцăсем крепăçленсе ларнă ту хысĕне йулашки суттине сапаласа шĕвĕр тăрăлă йăвăççене ылттăн çĕлĕк тăхăнтарчĕ. Пасăр партизансен сассисенчен хăраса йăвисенче пытанса ларнă тĕрлĕрен вĕтĕ кайăксем таврари сас-чӳ лăпланнине кура, йăвăçсен çийелти турачĕсем çине ларса хăйсен илемлĕ йуррисемпе лăпкă катана тепĕр хут йанкăслата пуçларĕç. Сасартăк катан çӳл вĕçĕнче пулемет шатăртатса илчĕ. Унтан сасартăк чарăнса лăпланчĕ. Партизансем пĕр самантра урасем çине сиксе тăрса, нимĕн ăнланмасăр пĕр-пĕрин куçĕсенчен пăхкаларĕç.

— Ку мĕне пĕлтерет, йулташсем?..

Анчах, никам та нимĕн пĕлменнине кура, пурте пĕр харăс пăшалсемпе пулеметсене хатĕрлеме тапратрĕç. Пурин куçĕнче те пĕр шухăш палăрчĕ: тăшман сиссе, катаран тухмали пĕртен-пĕр çула пулемет пăшалсемпе пӳлсе хунă. Йĕри-тавра пуссемсерен мăй таран кĕрсе лармала лачакапа шыв кӳллисем. Çамрăкрах партизансем ишсе тухса хăтăлма пултарсан та, пĕтĕм пулемет-пăшалсемпе вĕсен хатĕрĕсене ниьепле те хăтарма май çук. Нумай пулмаст йешĕл курăксем ăшĕнче тĕрлĕрен кайăктен илемлĕ йуррисене итлесе, канса выртакан партизансен пуçĕсем çинче аслатилĕ пăрлă çăмăр тапранас умĕнхи хура тăхлан тĕслĕ пĕлĕтсем пек ултавлă хăрушлăх карăнчĕ.

— Ну, мĕн тăватпăр-ха ĕнтĕ, йулташсем!—иккĕмĕш хут ыйтрĕ Чукмар, ниçтала кайма аптраса тăракан партизансенчен пулеметне курăк çине ларгса. Çак самантра уçланка илсе тухакан сукмак çинче виçĕ çын мĕлки курăнса кайрĕç. Иккĕшĕ уçланка тухсанах хыпăнса Чукмар патне чупса пычĕç, виççĕмĕшĕ пĕр-ик утăм кайсанах çӳлĕ курăк ăшне йăванса кайса курăнми пулчĕ.

— ... Катаран тухасси инçех те йулманччĕ,—чупнипе тарăнăн сывласа илчĕ Чукмара ăнлантаракан разведка кайнă 18 çулхи партизан,—сасартăк шатăр! турĕ те, малта пыракан Йакур мучи çĕре чикĕнсе анчĕ. Пуçсем тăрринче çăмăр çунă пек пуљкăсем шатăртатса йăвăçсем çине çапăннипе сехреленсе епĕр те çĕр çумне лăпчăнтăмăр. Пирĕнтен пĕр 30—40 хăлаçра ката хĕрринче, ултă пулемет курăнса ларaççĕ. Салтакĕсем пит нумайăн, пĕр 300 çын та ытла пулĕ. Анчах...—

— Йапунцăсем-и, йе вырăс офицерĕсем?—тӳсеймерĕ Чукмар,—хăш йенчен килнĕ-ши?..

— Нагорнăй йалĕнченех пулас, епĕр лупашкапа иртсе кайни çинчен асăнаççĕ.

Виççĕмĕш разведчик йулташĕсем каланине пуçĕпе сулса çирĕплетрĕ.

— Епĕ те аванах куртăм.

Чукмар тарăн шухăша кайса итлесе тăракан партизансене амăшĕ пĕртен-пĕр чирлĕ ачи çине пăхнă пек, салхулăн пăхса илчĕ.

„Çăлăнăç кĕтеççĕ, анчах мĕн тăвас ха манăн?



Куртей мучи хăй умĕнчи хăмăшсене икĕ йенеле сирсе пĕç кăкĕ таран пылчăка ашса утрĕ.

Çак минутра епĕ хам та ура айĕнчи çӳп пекех усăсăр. Нимĕн шухăшласа кăларма та пултараймастăп"—терĕ вăл хăй ăшĕнче.

Сасартăк ăшра çĕнĕ вăй çĕкленчĕ.

— Ак мĕскер, йулташсем, епĕ пĕр 5—6 бомбă çакса лачака урлă ишсе каçатăп та, тылран сехре тыттарап. Вăл вăхăтра есĕр... Çук, çук!—пӳлчĕç Чукмара 3—4 сасă, есĕ кунта кашни минутрах кирлĕ пулатăн, вĕсем сана вĕлерме те пултараççĕ.

— Лăпланăр,—терĕ Куртей мучи мала тухса,—кӳр Чукмар, йулташ, пулеметна, ку ĕçе епĕ тăватăп. Епĕ 1905-мĕш çулта Питĕрти саватра ĕçленĕ чух, пăлхану тапрансан пулеметчик пулса çӳрерĕм. Халĕ те пултаратăп пуљ тесе шухăшлатăп. Тата хамăн виçĕ бомбă пур. Хатĕрленсе кĕтсе тăрăр. Пĕр çур сехетрен мĕн пулсан та паллă пулĕ.

Вăл Чукмар пулăшнипе пĕчĕк пулемета çурăм çине çакрĕ те, унăн йăвăрăшне тĕрĕслесе каллĕ-маллĕ уткаларĕ.

— Таçта та çитме пулаĭ,—карапинне ачашшăн тытса хул урлă хучĕ,—сывă пулăр-ха еппин, йулташсем, тен, пĕрне пĕри йулашки хут куратпăр...

Хăмăшсем хушшине кĕрсе кайма пуçланăскер, кайала çаврăнса пăхрĕ те, паçăрхи çамрăк йулташĕ ытла та салхуллине кура чарăнчĕ.

— Ес, Ваљук, пĕртте ан пăшăрхан, „йулашки хут" тесе епĕ йури çеç каларăм. Ак тепĕр сехетренех тĕл пулăпăр. Тăван уйала та пĕрлех таврăнатпăр-ха.

Куртей мучи хăй умĕнчи хăмăшсене икĕ йекеле сирсе, пĕç кăкĕ таран пылчăка ашса, лăпсăркка çулçăлă йăвăç тĕмĕсем ăшне кĕрсе çухалчĕ. Хĕвел анчĕ. Улăх çийĕпе пăс йăсăрланса партизансемпе йăвăççен мĕлкисене тĕссĕрлетрĕ. Партизансем пулеметсене уçланка тухакан сукмак патне илсе пырса йĕркелесе лартрĕç. Пурте хатĕр, пурте хăр. пăрхăй вырăнĕнче. (Йулашки çитес №-те).

**М. Ирнин.**

# Пĕр-ик сăмахăн.

...Çапла пăхма йурать-и вара выљăха? Пайан „Улăпа" кăларса йанă та, кунĕпех çил хăваласа çӳрерĕ. Никам асăрхаман та, шăваракан та çук ăна. Паçăр, правленинче кайнă чухне пăхатăп та, пусă уменче пирĕн хайхи „Улăп" тăра парать. Тăвата урине пĕр çĕреле пуçтарнă мĕскĕн,—„хаçата вулать" кăна... Ăшĕ хыпса килнĕ апăршан, виçĕ патйа шыва сывламарĕ те, йанкăлт çеç тутарчĕ. Ăратлă ăйăр тавраш çапла пăхма йурать-и вара? Улпут майри пек пурăнмала унăн, вот! А пирĕн Микихвер, хăй коњух патне илнĕ те, каçăрлайса çӳрет. Ĕçкунĕ нумай ĕнтĕ унăн, ĕç çине çавăрăнса та пăхмасть, мур çынни.

— Ну, ну!, Есĕ улпут майрисем çинчен сахалтарах калаç, мучи! Есĕ пайан çимĕк касĕ, ваттисене асăннă йатпа сыпкаланă курăнать. Епир акă, бригадăпа Ăмпалăх пуссинче пилĕк гектар çум çумларăмăр. Пĕр ĕçкунĕ пулчĕ те. Çапла марим?

— Ĕçкунĕ çинчен мар епĕ, коњух Микихвер начарри çинчен каларăм-çке сана. Хăлхусем ăçта, ых-х, çĕр çăташшĕ...

— Хуллен, хуллен, чăмăрпа мар!.. Апат-çимĕçсĕр сĕнксе тăрать.

— Мĕн тата?

— Коњух начарри çинчен пĕлтерес пулать, вара çитес канашлура сӳтсе-йавăпăр, çавă çеç.

— Çапла кирлĕ. атту кĕсресем кăмăлсăра йулма пултараççĕ, коњух йурăхсăр пирки.

— Зайавлени хатĕрле есĕ апла пулсан. Епĕ хĕрсемпе çимĕк мунчи кĕме васкатăп ха, мучи-мулахай, сыва пул!—терĕ сарă çӳçлĕ çамрăк ачи. Хăй çавăнтах урам каски урлă хăрах уран сиксе каçрĕ те, хыçалти касала сиккипе чупса кĕрсе çухалчĕ.

Таçта, инçетре пусă каштисем çуйăхни, витре йанăрани, вырăсла хапхасем кĕриклетсе уçăлса хупăнни, каçхи апатлăх шыв кӳме аннă кӳршĕаршăсем халаплани,—пурте пĕр сасă карчĕ çине ларса çулахи тăкăс сывлăша хăпарать. Фермăра сысна çурисем çуйăхаççĕ. Касăн, кассăн йару çил питрен лăпка лăпка иртет. Ĕретленсе ларнă, улăм çийлĕ пӳртсен пĕчĕк чӳречийĕсене хăйă çутти ĕрешлет. Йал çине пиçсе çитнĕ хура хурлăхан пек çимĕк касĕ татăлса анчĕ.

Кӳлĕ çырми тăрăх тăршшĕпех ларса тухнă хура мунчасем умĕнче хĕрипраççем, йаш каччӑсем пухăнаççĕ. Çӳлĕ вăлак умĕнче ĕмĕрхи пуйанлăх укçи-тенкине хисепленĕ пек, кĕмĕл саслăн киремет шывĕ йухать. Унта кунсерен, кун кунланă сарă хĕвел арман пĕви хĕрринчи хăвалăх сулхăнне анса пытансан,—„Трактăр" колхоз çамракĕсем хĕрӳ ĕçпе пиçнĕ, тусан витнĕ ӳт-пĕвне тăрна куççĕ пек таса шывпа çуса киленеççĕ.

Халĕ кунта виçĕ шурă хурăн айĕнчен виçĕ шурă утпа çĕкленсе, кăн-кăвак каç сăнлăхне çурса, çитмĕл те çичĕ çул йуппи урлă каçса çӳрекен усал тĕсĕл тухатмĕш тавраш çук. Ку аваллăха, асаттесен ĕмĕрне йулнă халлап. Колхоз хĕрипраçĕ, вар пусакан вĕрӳçĕ карчăксен, качча каймасăр иртерекен, ийĕе чĕлхи пĕлекен кăлин-калинсен йĕркипе пурăнмасть.

„Кастар Йаккăвĕпе Çĕпĕр Ваçлейĕ чиркӳ праçникĕ каç сăмакун ĕçсе, ӳсĕр выртакан Трахвин Пухвирĕн арăмне намăс тунă, ихик!.." —тесе сăмах вĕçтерсе çӳрекен йӳле пилĕк, çара ура хĕрсем халĕ, пĕр-пĕр ватăрах асаттене тытса чарса, фосфорит çăнăхĕ сапса çĕре çемçетни çинчен, кăсал ăçта тырă мĕнле ӳсни çинчен каласа ăнлантараççĕ. Çĕнĕ вăй, çĕнĕ чĕрĕ хăват!..

Укăлча хĕрĕнчи уничене хĕрсем ешкерленсе хăпарчĕç. Вĕсем ĕнчĕллĕ сывлăмпа йанталаннă çерем çинче мăшăрăн-мăшăрăн карталанса тăрса, ватă йуман тавра „Кай, кай Ивана!" кĕввине йантратса çавăрăнаççĕ. Хура каç сĕмлĕхĕнче вĕçен лĕпĕшсем пек, шап шурă пуç тутрийĕсем, саппунĕсем вĕлкĕшеççĕ. Йăс шăнкрав пек таса, йантра уçă çамрăк сас шавĕ униче çийĕпе хăпарать; вăл варсем, васансем тăрăх сулмаклăн йухса саланать.

Пайан Писенти хĕрĕ Селĕвер йĕкĕте качча тухмала теççĕ.

— Колхоз пек йышлă пулăр. Сирĕн мухтавлă йатăрусем хĕрлĕ хăма çинче пулчăр. Ытларах ĕçкунĕ тăвăр. Пирĕн сăмахĕ нумай мар. Чипер пулăр, перекетлĕ пурăнăр. Ĕçлемесĕр выртса кахал йатне ан илĕр,—тесе çĕнĕ çынсене, хисеп туса пиллеççĕ çамрăксем.

Писенти хĕрĕн колхоза кĕриччен хăйĕн савни пулман. Вăл çирĕм çул урлă каçса хĕр шутĕнче хисепленсе, улаха-вăййа тухса курман. Ашшĕпе пĕрле кĕтӳ кĕтнĕ, хĕллехи вăрăм çĕрсенче кирек-кама алшиш-чулха çыхса панă. Çапла иртнĕ хĕр ĕмĕрĕ. Нихăшĕ те ун йатне усалпа та, ырласа та асăнакан пулман. Анчах колхозра вăл хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне тупнă. Унта вăл мухтавлă хĕр йатне илнĕ. Вара тин кăна йал йышсем унăн çĕмĕрт пек хура куçне, кулса тăракан уйăх пек, çапçавраka питне асăрханă. Иртнĕ çул Писенти хĕрĕ 250 ĕçкунĕ тунă. „Районĕпе чи паллă колхозницă" тесе унăн сăнне хаçатсем çине пичетленĕ. Колхозра вăл хăйĕн çухалнă телейне шыраса тупнă. Çавăнпа ăна пĕтĕм тавралăх пĕлекен, илемлĕ, вăйлă ака-туйĕнче никама çийеле кăларман паттăр йĕкĕт йуратнă та. Çамраксем те çимĕк курăкĕпе çăвăна-çăвăна, çĕнĕ пурăнăç улăпĕсем çинчен мухтав йурри йурланă.

Ватă йăмрасен тăрринчи лăс туратсем çинче вырнаçнă кураксен ушкăнĕ тӳлек ыйăха йараннӑ. Хушăран кăна вĕсем кĕтмен çил пырса хускатнипе çунат ухса, тĕксĕм шăплăхра сас тăваççĕ. Çăл шывĕ пек таса тӳпене тулли уйăх хăпарчĕ. Тав тунă курка майлă алгăр çăлтăр хĕвелтухăçнеле ӳпĕнет. Валак умĕнчи хурăнсем тӳп-тӳрĕ пĕвĕ çийĕпе пĕр хускалмасăр, кĕлĕре тăракан шурă шупăрлă ватă асаннесем пек, шăнкăртатса йухакан шыв çинеле тайăнаççĕ.

Епир Хĕветле тусăмпа тимĕрçĕ лаççи çумĕнчи ватă йăмрасем айне пытаннă пĕр вăргтăн тенкел çине хĕсĕннĕ те, иксĕмĕр те пĕр сăмах хушмасăр ларатпăр. Вăл тӳпери çăлтăрсем çине тинкернĕ, епĕ те хушăран унпа пĕрле çӳлеле пăхкаласа илетĕп.

— Пĕрре, Тургенев писатĕл Ламперг патне çыр-

нă çырăвĕнче: „Ман хĕрĕм телейлĕ çăлтăр айĕнче çуралчĕ",—тенĕччĕ. Ăçта вăл телейлĕ çăлтăр, хам ĕмĕрте тĕл пулаймарăм-çке епĕ ăна?—тетĕп йуратнă хĕрпе пĕр-ик сăмах та пулин ваклас шутпа.

— Мĕнле телейлĕ çăлтăр кирлĕ сана?.. Акă Писенти хĕрĕ Селевер йĕкĕте качча кайрĕ: есĕ иртнĕ çул пирĕнпе кăшман йăранĕсем çумлаттăнччĕ, кăçал хулара вĕренетĕн. Ĕлĕкрех, çуркуннепе Тăркай Çимунĕ йал тăрăх хутаç çакса тухаканччĕ, халĕ вăл колхозра паллă ударниксенчен пĕри, унăн тырă сутмалăх та пур, кирлĕ пулсан. Акă телейлĕ çăлтăрсем, тата мĕскер кирлĕ сана.

Епĕ Хĕветлепе килĕшнĕ пек пулса пуçа сулатăп.

— Акă тата Тапкă Кĕркурин Çемен хăтасен Маттăрнине кăçал çирĕм ĕçкунĕлĕх алимент тӳлемеле пулнă, халĕ те тӳлесе татман тет. Паллах, ку кĕсен-çăпана епĕ телейлĕ çăлтăр вырăнне хисеплес çук. Хĕветле манăн алла йарса илсе хытă чăмăртат те, йалтăр куллипе куçран тĕллесе, йĕкĕтсем авланни,—хĕрсем качча кайни çинчен сăмах тапратат.

— Халĕ туй йĕрĕхĕ сирĕлчĕ ĕнтĕ. Пĕр виçĕ çул кайарах хĕллехи микулнăра пирĕнпе кӳрĕшле пурăнакан Амессăв Хĕлипĕ хĕрне Платун Иванне качча пачĕ. Хĕлип Ивантан хулăн укçи тесе пĕр çĕнĕ кĕрĕк, 2 мăшăр çăматă, туй сăри çине йама 20 кĕрепенке пыл, хĕрне пăхса ӳстервĕшĕн 50 тенкĕ укçа, туй халăхĕ валĕçи 4 витре ханша илчĕ. Паллах, капла туй тесе пĕр-пĕр чухăнрах хуçалăхлă хресчен мĕн пур пурнăçне салатса йама пултарнă.

Хĕветле калавне малалах тăсат. Унăн чакăр, пысăк куçĕсем çийĕнче çулахи севкер пĕлĕтсем çӳренĕн туйăнаççĕ. Вăл, иртнĕ çул колхоз мĕнчухлĕ ĕçкунĕ туни çинчен калат. Кăçалхи май уйавĕ тĕлне пĕр мăшăр пушмак, пĕр пурçăн кĕпе илтĕм, тет. Унăн çӳллĕ, тулли кăкăрĕсем майĕпен хăпара-хăпара анаççĕ. Вăл калаçма чарăнса шухăша кайнă пек пулса ларат.

Шурăмпуç шуралса сарăлат. Ту çамкисене, ватă йăмрасен тăррисен пийеленĕ ирхи сĕт пек шурă тĕтре йерипен хăпарат. Виççĕмĕш хут автан авăтсан Хĕветле ал парса уйăрăлса, бригадăна лаша кӳлме чупрĕ. Епĕ çеремлĕ урампа ĕнчĕллĕ сывлăма йĕр туса правленире ĕçлекен Уксах Куçма патневаскатăп. Таврара шăпах, пĕр кушака та тĕл пулаймăн. Анатри урам тăваткалĕнче хĕстимĕр витсе, карнис кăларса тунă пысăк акăш-макăш çуртăн икĕ чӳречине йарах уçса йарса, ватă мучи пӳтсĕр Микихвер коньух çинчен правленине заявлени çырат.

II

Хир тип-тикĕслĕхне мăкăрлакан сăртсем çеç çухатаççĕ. Хирсем тăрăх август уйăхĕ çӳрет. Вăл, ыраша вырса, хăмăлсемпе витĕвнĕ хирсене сăра тăкăннă сĕтел пек саратса хăварнă. Хĕвел пăркаланат, пысăкланат, хирсен вĕçне анса хĕсĕнсе, çурмаран касăлат. Виçĕ тӳпе çинчи виçĕ курпун хурăнсем хĕвеле пирĕн çиран пӳлсе, ăна касăнса кĕреççĕ, хура йун тымарĕсем пек курăнаççĕ. Хĕвел хир ăшне путат. Йăмăх хĕрлĕ пĕлĕтсем сивĕнвĕçем сивĕнсе, ахахла йалкăшакан тĕсĕсене ирĕлтереççĕ. Хир пĕтĕмпех пушанат, сывлăш каçхи хура тĕксĕмлĕхпе тăкăсланат. Çурçĕр çинчен кунĕпех çулсем çинчи хăйăра хускатса, пĕлĕтсене хăвалана çилсем сасартăках чарăнчĕç. Таçта, инçетре вучах йалкăшат, ун тавра хура мĕлкесем йаваннаççĕ.

Епир тăваттăн: Карачук пичче, Христин, Аньук тата епĕ. Кунĕпех икĕ трактăрпа ыраш акилĕх алтăмăр. Халĕ шурут тымарĕсене, ерĕмсене çунтарса вучах тавра ларатпăр. Умра тĕтĕм мăкăрланат, йывăррăн ӳпеленет...

Ку хирсенче ĕлĕк Курбэтăв хуçа çĕрĕсем карăнса выртнă. Халĕ кунта „Хĕрлĕ çăлтăр" совхоз вырнаçнă. Ăмпăлăх ĕшнинче хĕвелтухăçнерех утар тăсăлса выртат. Тепĕр йĕнче „Трактăр" колхоз уйĕсем тытăнаççĕ. Епир тĕрнер хуглăхĕнче чарăннă.

Пирĕнтен чи асли—Карачук пичче. Вăл утмăл урлă каçнă ĕнтĕ. Çапах ĕç панче йаланах харсăр.

— Асатте, ватти çитнĕ ĕнтĕ санăн, кăмака çинче кăна выртмала,—текен çамрăксене вăл:—Е-ей, йĕкĕтсем, епĕ халĕ вунçичĕ çулхи хĕре качча илетĕп вĕт,—тесе шӳтлесе илет.

Карачук пичче калаçса лармa питĕ йуратат. Вăл пире авалхи йумахсене йарса кăтартат; ăçтаăçта, мĕнле майпа, камсем патĕнче çӳрени çинчен калат, ватă ăссем каласа хăварнисене аса илтерет.

— Епир вуниккĕн пĕр тăван пултăмăр,—тесе пуçларĕ вăл пайан. Хăй маттур йĕкĕт пек йĕм пĕççийĕсене чĕркуççи таран таварнă. Чĕтрекен аллисемпе вăл хушăран кăвакарнă сухалне йарайара илет. Унăн тарăн куçĕсем сăртлăхри ватă йуман тымарĕсем хушшинчен йухса тухакан çăл шывĕ пек туйăнаççĕ. Вăл кукăр чĕлĕмне тивретсе йарса, малала калат:

— Пирĕн атте Атăл тăрăх баржăсем çинче ĕçлесе çӳретчĕ. Аллă çула çитнĕ çĕре вăл, Атăл хумĕсем çинчех пуçне çирĕ. Вара епир пĕр аннепе кăна тăрса йултăмăр. Анчах вăл та тăтăшах ăшпа аптракан пулчĕ, йун сурма тытăнчĕ. Кайарахпа ура çине те тăрайми пулнăччĕ. Епир анне сывлăхĕшĕн киремет турра пăри пăттипе чӳклесе, йусман йурса пăрахса пуççапаттăмăр. Ку вăхăтала пирĕн аслă Çĕпритун пичче Пĕхĕлме таврашĕнче пурăначчĕ. Епир час-часах унăн çырăвĕсене илсе тăраттăмăр. Анчах вăл та хыпар йама пăрахрĕ. Хамăр йатпа ăна шыраттарса та пăхрăмăр, усси пулмарĕ. Чылай вăхăт иртсен кăна пирĕн Çĕпритун пиччене, çын вĕлернĕшĕн имĕш, Çĕпĕре пуçĕпех йани çинчен хыпар илтĕмĕр. Кун хыççăн анне те нумай пурăнаймарĕ. Вăл йур кайнă вăхăтра, мункун умĕн—кăчкă ернинче вилчĕ. Епир йăваран уйăрăлнă кайăк чĕпписем пек вара, ăçта куç курнă çавăнтала салантăмăр...

Вăл калаçма чарăнса, туртмасăрах сӳннĕ чĕлĕмне тепĕр хут вут умне пĕшкĕнсе тивретет. Кĕçеленнĕ йешĕл çерем курăкĕ çине çăра чĕлĕм тĕтĕмĕ шурă хут пек сарăлат.

—„...Çапла вара епĕ атте килĕнчен тухса кайса Атăл тăрăх Самар, Хусан, Тетĕш тăршĕнче, унтан Шупашкарпа Чулхула хушшинче хама тивĕçлĕ телейĕме шыраса çӳрерĕм. Çамрăклах грузчикре ĕçлесе, çурăм шăмине амантрăм. Пурнăç ман çийе асаплăх, хĕн-хур хутаçне çакса йачĕ. Епĕ ĕмĕрлĕхе курпунлă, кутамаслă пĕвĕмпе тăрса йултăм"...

Вăл кăвак йунтымарлĕ аллипе мăкăрăлнă çурăм-

не йарса илсе, ватӑ сӑнлӑн ҫӳрекен, пысӑк, тӗссӗр куҫӗсене пирӗн ҫинеле тинкертрӗ.

—...Епӗ чаплӑ, хисеплӗ Питӗр урамӗсем тӑрӑх та утса куртӑм. Унта пирӗн ватӑлӑх пичче пурӑначчӗ. Вӗсем виҫҫӗнччӗ: хӑй, майри—арӑмӗ тата виҫӗ ҫулхи хӗрӗ пурччӗ. Вӗсем хула тулашӗнче, подвалта, пӗр пӗчӗкҫеҫ пӳлӗмре пурӑначчӗҫ. Пӳлӗм йаланах нӳрлӗ тӑраччӗ, маччаран тумла сӑрхӑначчӗ. Ватӑлӑх пиччеле арӑмӗ ирхине кӑвак ҫутӑлах ӗҫе тухса кайаччӗҫ. Епир виҫӗ ҫулхи Машукпа хваттере йулаттӑмӑр. Анчах вӑл нумай пурӑнаймарӗ, тӑватӑ ҫул урлӑ каҫичченех шатан-йухана кайса вилчӗ. Чылай вӑхӑт иртсен пиччепе арӑмӗ хӑйсем те патша патне ҫӑкӑр ыйтма кайнӑ чухне казаксен хӗҫҫи айне пулса вилчӗҫ.

Унтан вара епӗ хамӑр таврана таврӑнса Кармӑш тутарӗ патӗнче хӑйар хуралҫи пулса ӗҫлеме тытӑнтӑм. Ҫакӑнта пурӑннӑ чухне хамӑрӑн кӗҫӗн тӑван Хусанта пурӑнни ҫинчен пӗлтӗм. Вӑл вуникӗ тӑванран чи ӑслӑ, ҫивӗч ӳснӗччӗ. Вӑл хӑй тӑрӑшнипе хут-кӗнеке вулама вӗренӗччӗ. Пӗрре ҫав ман патӑма—Кармӑша таврӑнчӗ. Мана хӑйар пахчинче ларнӑ чухне хура халӑх нушисем ҫинчен, унта та пӑлхавсем пыни ҫинчен каларӗ. Вӑл чӑвашсен Чикме уйесӗнче, Шурча йалӗ ҫывӑхӗнчи Мӑркауш шывӗ ҫинче пулса иртнӗ пӑлхав ҫинчен сӑмах тапратрӗ. Пӑлханакансене пусарма Корейшша йатлӑ ҫар пуҫӗ пынӑ тет вара. Чӑвашсем казаксене хирӗҫ ухатник пӑшалӗсем ҫине сӑхман тӳмисем, шӑрҫасем хурса персе хирӗҫ тӑнӑ тет, анчах ҫӗнтереймен. Вара пӑлхавҫӑсен виллисем ҫырма-ҫатрасенче, вӑрман уҫланкисенче пӗр-ик ерне хушши вырткаласа, йӑваланса ҫӳренӗ... Ҫакӑнтах вӑл Разин, Пугачов ҫинчен те аса илчӗ. Разинпала Шупашкар, Ҫӗрпӳ, Йетӗрне, Кармӑш, Чикме уйесӗсенчи чӑвашсем пӗрлешсе ҫапӑҫни ҫинчен каларӗ.

— Пӗрлешсе пулат, пӗрлешмесен кайран ӳпкеленмеле ан пултӑр. Епӗр сире усал тумастпӑр, сирӗншӗн тӑрӑшатпӑр,—тенӗ Разин чӑвашсем патне йанӑ хут ҫинче. Пугачов Йемелӗ те Ҫӗрпӳ хули таврашӗнчех ҫапӑҫнӑ тет. Пугачовсенчен йулнӑ тупӑ кӗпҫи пайан кун та Ҫӗрпӳрех выртат-ха...

Кусем пурте нимӗнпе те палӑрайман, тӗксӗм пурнӑҫ йӗрӗсем кӑна. Вӗсене есӗр кашни ман пек етемӗн ӗмӗрӗнчех курма пултаратӑр. Ӗлӗкхи ҫын тӗттӗм пулнӑ, кӗнеке хаҫат алла илсе курман, унӑн халӑхи пек тӗлӗнмеле ӗҫсем тума халӗ ҫитмен. Пӗр вӑтӑрпилӗк ҫул ӗлӗкрех чӑвашла чӗлхепе „Пулхӑр" йатлӑ хаҫат кӑларма ыйтнӑ тет, анчах пуҫлӑхсем ирӗк паман. Пуҫлӑхсем нумайччӗ ӗлӗк, хайар пуҫлӑхсем. Ӗлӗкхи пурнӑҫра манӑн нимӗнле ҫулйӗр те пулман. Йе ҫакӑнас, йе пуйӑс айне пулса касӑлас тесе кӑна ҫӳреттӗм. Пӗртен-пӗр ӗмӗт—вилӗм... Халӗ ӗнтӗ, ачасем, апла мар. Халӗ епӗр ҫӑлӑнӑҫ ҫулӗ ҫинче. Халӑхи пурнӑҫпа епӗ тепӗр ӗмӗр тӑршшӗ пурӑнма та хатӗр."

Карачук пичче калаҫма чарӑнса, хӗвелтухӑҫнелле тинкерет. Унтан вӑл пӑтранчӑк ҫӳҫлӗ пуҫне кӑкӑрӗ ҫине пӗксе, лӑпкӑ ыйӑхпа тӗлӗрет. Епир Христинпа касӑ хушшине улӑх ути сарса выртатпӑр. Аӈук ҫаран тӑрӑх кайурасене шуйлантарса ҫӳрет. Епӗ Карачук пичче калавӗ пирки шухӑша кайса выртатӑп. Умма иртсе кайнӑ ӗмӗрсеӈ сӑнӗсем ӗкленеҫҫӗ. Вӗсем сӗлекеллӗ, кӗсен-ҫӑпаилӑ, йунлӑ, пӳр-сӳрлӑ, тӗлӗнмеле пысӑк кӗлеткесем пулса, шурӑ тӗтрепе йавӑнса патӑмала ҫывхарнӑн туйӑнаҫҫӗ. Акӑ халех вӑл ҫитсе ҫӑтса йарас пек тӑрат. Анчах, ҫук... Пулас ҫук... Епӗ хӑватлӑ, епӗ ӗмӗр ҫынни!

Таврана хура каҫ сӗмлӗхӗ хуплат. Тӳпере пӗччен уйӑх качака пӳтекки пек пӗлӗтрен пӗлӗте сиксе йуртат. Инҫетрен, йал йенчен хӗрсен йантра уҫӑ сасси, хуткупӑс калани илтӗнет. Ҫумӑмра пӗр хускалмасӑр вырткакан Христин сасартӑк тӑрса ларса, кӑкӑр кӑсийинчен тусан пуснӑ хура блокнотне кӑларат те, темӗскер ҫинчен васкаса ҫырма тытӑнат.

— Ыран пирӗн вуникӗ гектар сухаламала,—тет вӑл, кӑранташӗпе ман йенеле хӑмсарса.

— Сухалатпӑр!..

III

Халӗ Ивана пур ҫӗрте те: кил хушшинче те, кӳршӗ-аршӑра та, хӑнара та, пасарта та—„ударник Иван" тесе чӗнеҫҫӗ. Анчах ӗлӗк ӑна ҫапла йатпа чӗнсе хисеп туман.

...Вӑл вунҫичӗ ҫулӑ ҫитнӗ ҫӗре сӗм тӑлӑха йулса, пур кӗтессене те ҫитсе ҫапӑннӑ. Пӑрлӑ Мурмӑнскран шӑрӑх Дӳшамбене ҫити, Балти хумӗсем ҫийӗнчен—инҫетри хӗвелтухӑҫӗ таран, пур ҫӗре те ҫитсе кӑмӑл тунӑ, телей шыранӑ Иван. Анчах ӗмӗрсем ҫухатнӑ телейе вӑл тупайман. Нимӗнсӗрех вара Иванӑн хӑй ҫуралнӑ, асаплӑ тӑван ҫӗршыва, ашшӗ-амӑшӗн тӗтӗм сӳннӗ кӑлин-калин кил-ҫуртне кайала килсе кӗмеле пулнӑ. Ҫийӗнче унӑн пӑнтӑхнӑ, муртнӑ ҫӗтӗк-ҫатӑк тумтир ҫапкаланса тӑнӑ. Урисене чуллӑ, хӑйӑрлӑ ҫул-йӗр касса амантса пӗтернӗ. Ура тунисенче йун йӗрӗсем палӑрса тӑнӑ. Асап сӑнӗ ҫапнӑ, хыткан, кӑвакарнӑ пичӗ ҫийӗнче шурӑ пыйтӑ ҫӳренӗ. Ӑна никам такӗтсе илмен, тӑвар ҫӑкӑрпа хирӗҫ тухман. Пӗр ирхине кӳршӗ арӑмӗсем нусӑ умне шыв ӑсма тухсан:

— Пыйтӑ Иванӗ каллех йала таврӑннӑ, ихик, тесе асӑнкаланӑ та, иртсе кайнӑ.

Ҫапла пурӑннӑ вара хӑй Иван, пайан кунта—ыран лере тенӗ пек. Вак ача-пӑчасенчен тытӑнса, ватти-вӗттине ҫитиччӗнех—никам та ӑна ҫын вырӑнне хисеплесе ҫӗлӗк илсе сывлӑх сунман, ырӑ йатпа чӗнсе курман.

— Пыйтӑ Иванӗ... Пыйтӑ Иванӗ!..

Анчах ҫак виҫ-тӑватӑ ҫул хушшинче куҫҫуллӗ, мӑшкӑллӑ йат вырӑнне Ивана, мухтавлӑн та чаплӑн—ударник Иван, тесе чӗнме тытӑннӑ. Ку ахаӈрен кӑна, ҫилпе вӗҫсе килнӗ йапала мар. Вӑл ҫӗнӗ условире, ҫӗнӗ хуҫалӑхра, чаплӑхпа мухтавлӑх ӗҫӗ ҫинче ӳссе ҫирӗпленнӗ йапала. Иван иртнӗ ҫул колхозра 100 ӗҫкунӗ тунӑ. Кӑҫал вӑл коӈӳхра ӗҫлет. Иванӑн хӑйӗн ӗмӗрӗнче ку таранччен тӗрӗстӗкел ҫурт йӗр пулман пулсан, кӑҫал вӑл хӗҫтимӗр виттерсе, карниз кӑларса, кантур пек пысӑк, аслӑ ҫурт лартрӗ, пушмак пӑру туйанчӗ. Ҫапла ӗнтӗ Пыйтӑ Иванӗнчен—ударник Иван ӳссе ҫитӗннӗ.

Пайан шкул ҫуртӗнче хӗрарӑмсен пуххи пырат. Ҫавӑнпа йашсем кӗҫӗр пӗрерӗн-пӗрерӗн саланман, пурте шкулӑн ҫимӗҫ пахчи айкинчи пысӑк урлӑ саксене тӑрӑх купаланса, хуткупӑса нӑрлаттарса лараҫҫӗ. Пӗр касси шкул умӗнчи ватӑ, хӑвӑл хурама тавра пӗр карта пухӑнса тӑрса, „Тухати те тухмасти" шӑрантараҫҫӗ. Тепӗр хӗрӗнче алӑ ҫупса, ура хуҫса ташша йараҫҫӗ. Ударник Иван хӑй

тавра çамрăксене пухнă та, „Гигант" совхоз çинаен касса кайсах йумах çаптарат̆:

—... Çапла, çапла... Унта комбайнсемпе ĕçлеççĕ, чра. Пурна киле пирĕн колхозра та çав акăш-макăш машинсем пулĕç-ха. Халĕ епĕр трактăрпа ĕçлетпĕр ĕнтĕ, а пĕр висĕ тăватӑ çул ĕлĕкрех ун синчен тĕлленмен те, асра та пулман. Пурнă малалах йуртат̆ вăл...

Ĕмĕрсен нушисене хăйсем çинчен сирнĕ çак савăнăçлă, йурă-савăлă, ĕçлĕ çамрăксем çине пăхса тĕлĕнетĕн вара. —О, мĕнле мухтавлă йанăрат̆ етем!..

„Трактăр" колхоз, 1933-мĕш çул.

# Ирхи трамвай

Ак, шурăмпуç сар хĕр кулăшĕн,
Тăр пĕлĕте сăрлат̆ шупка сăрпа.
Çав вăхăтра вăранакан хулинĕ
Йан йанăрат̆ хаваслă сасăпа.

Унчух вара вĕçхĕрсĕр умлăн-тыçлăн,
Пур трамвайсем тухаççĕ ирĕке.
Пур хапрăксем кăхраççĕ усă саслăн
Хĕрӳ ĕçе тухма ĕççыннине.

Хăйуланса чупат̆ трамвайăн пуçĕ,
Урса чупат̆ трамвай, хашка хашка;
(Мăн комбинат йенче ун çулĕ усă)—
Ĕççыннине леçмешкĕн вăл васкат̆.

Трамвай чуппи кĕмсĕртетсе çурасшăн
Пылакăн ыйхăланă шăпляха.
Трамвай пекех еп те ĕçре васкасшăн,
Çелесшĕн сройкăри пур саплăка.

Ĕçлет республикĕм хаљ çĕрĕн-кунĕн,
Çирĕпленет куллен ирпе, каçпа.

Ак çавăнпах трамвай йарнат̆ йаш йунăн,
Ак çавăнпах тусланнă еп лаçпа.

Еп те пайан тăрайрăм пит те ир,
Еп те васкап трамвай çине ларма.
Хаваслăхпа тулайнă шавлă ир,
Тек васкат̆ мана ĕçе кайма.

Манашкалах васкат̆ лармашкăн çлессăр,
Манашкалах вăл та кайра тăр т̆.
„Мĕнле кайан-ха хаљ билет илмесĕр?—"
Укса парса, калат̆, кондуктăра.

Ак, майĕпе тухат̆ шупка хĕвелĕ,
Савни пекех кулса пăхат̆ хитрен.
Мана шырат̆ вăл трамвайра пит тимлĕн,
Тупсан,—ай . . . чуп туса илет питрен.

Çак шавпала пĕрле тăрса ĕçе тухмасăр
Ĕс çĕршыва тăшман пек сийенлен.
Чупсам трамвайăм, чуп кахалланмасăр,
Турттар паха епоххăн ачине.

**Пекеп Иванĕ.**

Алуштă хули, 1933 çул.

# Хуралçă

Ма çанталăк пит хуралчĕ,
Пăх, тавраллăх хуп-хура.
Çук, çапах Т̆апук хуралçăн
Куçĕ çивĕччĕн курат̆.

Çил улат̆-и ун хыç-умĕн,
Ие кĕрхи каç пит кичем.
Вăл колхоз амбарĕ çумĕн
Тек утат̆, утат̆ пĕччен.

Ак хаљ çилĕ чейе тиллĕн,
Йăпшăнса кăна йуртат̆...
Вăл салтак пек пит те тимлĕн
Пăшала хыт чăмăртат̆.

Ват Т̆апукшăн халĕ паллă;
Амбара тăшман сăнат̆!..
„Çук, кунта хăваймăн алă",
Ылханса вăл асăнат̆.

Çавăнпа куççем ун çивчĕ,
Мĕн пек шанчăклăх унта.
Çулĕ утмăл мар, вунçиччĕ,
Ан çыхлан, тăшман, унпа.

Çил улат̆-и ун хыç-умĕн,
Ие кĕрхи каç пит кичем.
Вăл колхоз амбарĕ çумĕн
Тек утат̆, утат̆ пĕччен.

## Вашки.

***

Кашла, кашла хура вăрман,
Пайан ес манăн чун уççийĕ,
Мĕн пек çĕкленнĕ кăмăл ман
Вĕçме, кăтралă пуçу çийĕн.

Сисеп, пĕлетĕп ачаран,
Туйап чĕлхесĕр шăплăхна та,
Йепле хам сассăма чарам,—
Сана тăванлăн еп пăхнатăп.

Ах, кунĕ ăшă... тен, вăл та
Пĕр саншăн усна та-и алăк?...
Вăрçаттăн вăйлă тăвалпа
Пăлхавлăн урнă чух çанталăк.

Унчух силленнĕ мăн йуман,
Хура тăрри çилпе алхаснă,
Пĕр шăп кĕтес кунта йулман,
Тем тĕрлĕ сас сана, вĕт, каснă...

Йе кунĕ йалтăр çутатсан,
Инçе çĕртен хĕвелĕ анлăн
Сана илемлĕн вутласа
Тумна пит капăрăн сăрланă.

Анчах айра сан шăп каçах,
Йăвăç хушши тĕтрелĕ касĕ.
Сан çийĕн урлăн тек касса
Тăхланлă пĕлĕтсем йухаççĕ...
Йанравлăн халĕ кашнă ир
Сана çурат̆ гудок мăн саслăн.
Санпа çак савăт кашлаки
Мĕн пек пайан мана хаваслăк!..

ыççăн çĕнĕрен вăйлăн тытăнса организацилене рыранне, ним сас-чĕвĕсĕр пĕтсе ларат. АХР организаци пуçлăхĕ пулнă Матвицки йул, ĕçсене паллă мар—такама парса хăварса, Шупашкартан вĕçтерет.

Паллах, «начар организаци çук,—начар организатăрсемпе организацин начар членĕсем çех пур».

АХР пĕтсе ларни, чăваш ИЗО искусстви ытлах та кайа йулса пыни—чăтмала мар ĕç пулса тăчĕ.

Партин Чăваш Обком бÿровĕ йанварĕн 15-мĕшĕнче 1933 çулта ку тĕлĕшпе татăклă кăтартса хăварчĕ. Вăл кăтартура:

1. Чăваш совет художниксен сойузне организацилесе çирĕплетес. 2. 1933 çулта ИЗО профшколне уçса кадăр хатĕрлес. 3. Выставкă залĕсем, мастерскойсем туса художниксене ĕçлеме условисем парас. 4. Чăваш республики 15 çул тултарнă çĕре художествăлă выставкă организацилес пирки ĕçе тытăнас —тенĕ, тата ыт. те.

Кун хыççăн Наркомпросăн искусствă секторĕ, тата уйрăм çамрăк художниксем (Мйасников Демидăв) тăрăшса тытăннипе, Чăваш совет художниксен сойузĕ 1933 çулти февралĕн 24 мĕшĕнчен пуçласа тин хăйĕн историне шутлама пуçлат.

Художниксем ку собранире Оргкомитет тăвасçĕ. Вăл Оргкомитета: Мйасников А. Ф., Демидăв Н. Д. тата Спиридонăв М С. йулташсене суйласçĕ. Оргкомитет тÿрех Чăваш республикинчи пĕтĕм художниксене пĕрлештерсе вĕсене организацилеме тытăнат Уччота илнĕ тăрăх, хальхи вăхăтра пĕтĕм чăваш художникĕсем 55 çынна йахăн çитесçĕ. Анчах та вĕсенчен 10 çын анчах ха чăваш совет художниксен сойузне кĕрсе çирĕпленнĕ.

Оргкомитет художниксене социалисăм строителствине хутшăнтарас пирки, тата парти кăтартăвĕсем тăрăх (Обком Чăваш Парти бÿровĕн 1933 çулта йанварĕн 15-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх) Чăваш республики 15 çул тултарнă çĕре художествă выставки организацилесси çинчен Тĕпĕçтăвком умĕнче ыйту лартат.

Чăваш Тĕпĕçтăвком çумĕнче йатарласа пулнă канашлура (1933 ç. ийулĕн 29-мĕшĕнче) художествăлă выставкă организацилессипе пĕрле ытти ыйтусене те тишкĕрсе тухрĕç. Вăл канашлура Тĕпĕçтăвком председателĕ Никитин йулташ Чăваш ИЗО искусстви çинчен çапла каларĕ:

„Пирĕн Чăваш академи театрĕ пур, Чăваш патшалăх хорĕ пур, Музăк техникумĕ пур, чăваш писателĕсем пур, анчах художниксем (организациленмен пирки) вĕсене çук теме пултаратпăр... Чăваш ИЗО ытти искусствăсенчен кайа йулса пыни паллă ĕнтĕ. ИЗО искусствăна (художниксене) организацилесе, вĕсене условисем парса, мала йама тăрăшас пулат",—терĕ.

Художествăлă выставкă организацилес пирки канашлу çакăн пек йышăнчĕ:

Чăваш автономи 15 çул тултарнă çĕре художествă выставки хатĕрлес пирки ĕçлеме 1933 çулта—2 пин тенкĕ уйăрса парас;

Художниксене хаљ уçнă художествă выставкисене курма Мускава йарас. Çакăн пирки вырăнти бÿджетран пин тенкĕ уйăрса парас;

Чăваш Çутĕç комиссариачĕпе Шупашкарти Хула советне Чăваш совет художниксен мастерскойĕсемпе студи валљи çурт тупса пама хушас;

1933 ç. августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа, Çутĕç Халăх комиссариачĕ сметти тăрăх, художниксен сойузĕнчен пĕр штатлă ĕçлекен йышăнас.

Ку постановлени—художниксемшĕн чаплă постановлени Халиччен художниксем пирки кун пек постановлени чăваш правителстви йенчен пулман-ха.

Хаљ, художествăлă выставкă организацилес пирки. Оргкомитет йышăннă тăрăх—пурĕ выставкăра: 50—живопислĕ картин, 10 скульптурлă ĕçсем, 300 графически картинсем, тата 300 таран ытти вĕтĕ картинсем пулмала.

Смета тăрăх, художествăлă выставкă организацилеме 100 пин тенкĕ укçа каймала. Сметăна правителствă йышăннă хыççăнах, художниксен йатарласах районсене ĕçлеме саланмала.

Выставкă валљи картинсем çырма çак художниксене уйăрса хунă: **Живописçсем:** Спиридонăв М. С., Мйасников А. Ф., Тагайĕв А. М., Макарăв В. М. Филиппăв Г. Ф., Лаврентйĕв, Сверчков, Данилăв Г. Д. Толстой, Игошин., Дымăв, Мохăв, Васильĕв К. М. тата Йурий Зайцĕв. **Графиксем:** Филиппăв В. А., Демидăв А. Д., Дементйĕвă, Сорокин, Тараканăв. **Скульптăрсем:** Мйасников А. Ф. Воскресенски, Чекмарев, Скоробогатăв, Спиридонăв З. С. тата. ыттисем те.

Йулашки вăхăтра Мускаври, Хусанти, Горкийри паллă художниксем те выставкă валљи ĕçлесси çинчен хăйсен килĕшĕвĕсене çырса пĕлтерчĕç

Чăваш художникĕсенчен чылайĕшĕ выставкă пирки тахçанах ĕçлесçĕ Спиридонăв М. С., Макарăв, Мйасников тата Филиппăв Г. Ф. нумай пулмаст йатарласах колхозсене кайса укерчĕксем туса çĕнĕ материйалсем пухса килчĕç.

Спиридонăв, Мйасников колхоз строителстви çинчен пысăк картинсем çырма тытăннă та ĕнтĕ.

Чăваш совет художникĕсем. парти кăтартăвĕсем тăрăх пырса, Чăваш республики 15 çул тултарнă çĕре чăваш республикин 15 çул хушшинчи çĕнтерĕвĕсене кăтартакан художествăлă выставкă уçасса шансах тăраççĕ.

**А. Демидăв.**

В. Долгов

# Ӈамаӈăн иккĕмĕш сборникĕ çинчен

М. Ӈамаӈ „Тантăшсене“ сăвăсен сборникĕ. 1933 çул. Чăваш патшалăх издательстви кăларнă.

Сборнике çак сăвăсем кĕнĕ: „Тантăшсене“, „Çĕнтерулĕх кĕвви“, „Çĕнĕ марш“, „Çилосшăн—похода“, „Революцин урса тăвăл саслăн“, „Лагер кĕвви“, „Интернационалă сӆота“, „Призывник йурри“, „Физкуӆт-марш“, тата ыттисем те. Сборникре пĕтĕм вĕсех çĕнĕ пурнăç çинчен калакан, çĕнĕ тематиклă сăвăсем темеле Анчах çĕнĕ тематикă хăй кăна нимех те каламаст иккен. Кĕвви çинчен те çавнах каламала. Хăшпĕр поэтсем çĕнĕ тематикăна та кивĕ тематикăна та пĕтĕм вĕсех социалисăм строительствине пăхăнтараççĕ, теприсем çĕннине те, киввине те çак ĕçе пăхăнтараймаççĕ. Ку та сахал, хăш чух çĕнĕ тематикă урлă та кирлĕ мар, ĕçхалăхшĕн йут шухăшсем сарăлаççĕ Ку икĕ йапаларан килет: пĕр йенчен, писатĕл хăйĕн класлă интересĕсем çĕнĕ пурнăçшăн йут пулнинчен; тепĕр йенчен, писатĕл хаӆхи кĕрешĕве тавçăрса илеймен, çĕнĕ пурнăç тематикне хăйĕн аллине кирлĕ таран çавăрса илеймен пирки пулать. М. Ӈамаӈ çинчен те йулашкине калама тивет. М Ӈамаӈ çĕнни çинчен çырать, анчах çĕннине вăл сахал пĕлет. Ĕç чăнах та çапла пулни çинчен „Тантăшсене“ сборник пит те лайăх каласа парать.

Мĕн çинчен, тата мĕнле çырать-ха çак сборникĕн авторĕ?

М. Ӈамаӈ чылай ĕçленĕ çамрăк поэт, çырма та вăл 4 çул çырать, йулашки çулсенче икĕ сборник кăларчĕ.

Çакна М. Ӈамаӈ мантарасшăн мар пулас. Çак тĕлĕшпе вăл кашни саввинче тенĕ пекех хăйне, тата хăйĕн сăввисене хаклать.

Вăл çырать:

„Пĕтĕм сасран карса пыра...
Бомбă—сăвă йатса пырап..“ (17 стр.)

Йе тата:

„Еп йалан—
Кĕрешӳ шестерни...
Çавăнпа çухăрап тăвăлла“ (18 стр.).

Татах:

„Революцин урса тăвăл саслăн
Аслати пек, çĕре чĕгретĕп...
— Тăвăл сассăм, кĕрле питĕ аслăн,
Боӆшевикла вăйпа чĕгре, тетĕп“ (25 стр.).

Татах:

„Епĕр—ушкăн хайар саслă,—
Епĕр—çиллĕ арăслан...“ (36 стр.).

Çак сăвăхсем мана чăвашсен авалхи йумахĕсене аса илтереççĕ. Пулнă, тет, елĕк хура вăрмансенче хайар арçурисем. Вĕсем калама çук вăйлă кăшкăрнă, тет. Урса тăвăллăн çухăрнă, тет.

„Тантăшсене“ сборникри сăмахсем тăрăх, М. Ӈаманӈ калама çук вăйлă кăшкăрать, кăшкăрать кăна та мар, вăл—„тăвăллăн“ çухăрать. Вăл „революцин“ çухăрать, вăл „урса“ „тăвăл саслăн“, „аслати пек“, „çиллĕ арăслан“ пек“ çухăрать... Анчах урса çухăрни поэта анчах мар, никама та килĕшмест. Поэтăн çырмала, вĕренӳ урлă, кĕрешӳ урлă паха, хĕç пек çивĕч сăвăсем çырмала. Илемлĕ литературăри произведенисен çулăмлăхĕ никçан та поэт ниме пĕлмесĕр, „çиллĕ арăслан пек“ „урса“ кăшкăрнинче, йе çухăрнинче пулман.

М. Ӈамаӈ кашни сăвăрах кĕрешӳ çинчен асăнать. Анчах вăл кĕрешӳве мĕнле ăнланать ха? Тата кампа кĕрешме хушать?

Унăн кашни сăввинчех „кĕрешӳ“, „тăшман“ сăмахсем пур анчах чăн чăн тăшмана, кĕрешӳве кăтартса пани çук.

„Тăшман“ çинчен вăл çапла çырса парать:

1. „Тăшман пур,
Ахăрса çихĕрет..“ (5 стр.).

2. „Тăшманлăх пулсассăн —
Хăварччĕ вăрса ..“ (8 стр.).

3. „Тăшман пурра сисетпĕр те,
Тухатпăр çеç кар....
Пире йут çĕр чикĕ пĕртте—
Пусăм кирлĕ мар“ (13 стр.).

4. „Тăшман пулсан хыçра, малта,
Сăввăмпала персе хуçап.
— Итле йăх йах, çĕлен калта,
Кĕрешӳре ес мар хуçа!“
Мĕлйун воӆтпа тапан чĕрем—
Никçан сӳнми вулккан—катмар,
Кĕрешӳре тăрать черет
Тăшман пуçне çапса ватма“ (16 стр.).

5. Кĕрешӳ хирĕнчи дачăра
Тăшмана аркатар лачăрах“ (28 стр.).

6. Хăрамасть тăк тăшман. четĕр...“ (33 стр.).

7. „Ан алхас ес, тăшман,
Чарăн,
Перчĕк йулмăн çĕр çине“
. . . . . . . . . . .
„Тăшмана хаӆ çак çĕр тăвăр...“ (34 стр.).

Епĕр цитатăсем нумай кӳрĕмĕр. Вĕсене пурне те тĕрлĕ савасенчен илнĕ. Вĕсем мĕн çинчен калаççĕ-ха? Чи малтан, вĕсем М. Ӈамаӈăн пăтранса пĕтнĕ шухăшĕсем çинчен калаççĕ. М. Ӈамаӈ тăшмана „вобче“ ăнланать. Пĕр сăввинче те вăл конкретнăй тăшмана кăтартайман. Тăшманăн конкретлăхĕ—унăн класлăхĕнче,—анчах ăна М. Ӈамаӈ ăнланман. Пирĕн шалти тăшмансем: кулак, сутăç, бурократ, подкулачник, оппортунис, тата ыттисем те,—вĕсене хирĕç пыма параппан çапса „еплетпиле“ мар, класлă сисĕмлĕхе ӳстерсе кĕрешмеле,

вĕсем кирĕн класлă тăшманесем,—çакна манма кирлĕ мар!

Поет „Тăшмана“ вăрса хăварма хушать. Кулак—пирĕн конкретнăй тăшман. Епĕр, колхоз йухăмне талккăшпех сарса пырса, кулаксене пур çĕрте те класĕпех пĕтеретпĕр. М. Ђ м ђ вĕрентнĕ тăрăх, вĕсене „вăрса“ хăвармала, урăхла—айакка тăратса, йе тĕксе йарса хăвармала.

Сталин йулташ партин 16-мĕш сиесĕнче: „Пĕр пусăм та йут çĕр кирлĕ мар. Анчах хамăр çĕре те, никама та пĕр вершук та хамăр çĕре памастпăр“,—тенĕ. М. Ђамађ пĕр сăввинче çак шухăша илнĕ, анчах ăна вăл веçех каламасть, вăл çуррине кăна илет. „Пире йут çĕр чикĕ пĕртте—пусăм кирлĕ мар“,—тет те ĕçне пĕтерсе хурать. Тӳрех каламала: кам та кам çак политикла формулăн иккĕмĕш пайне кăларса пăрахать—вăл унăн тĕп шухăшне пĕтĕмпех пăсса хурать., Тем чухлĕ тăшмансем çинчен кăшкăрсан та, ĕçе М. Ђамађ пек тусан ним те тухмасть.

„Тăшмана“ тата Ђамађ сăмахпа чарасшăн: „итле·кĕрешӳре ес (тăшман—В. Д.) мар хуçа“—тет вăл. Йе тата: „ан алхас ес, тăшман, чарăн, пĕрчĕк йулмăн çĕр çинче“—тет (34 стр.). Урăхла çакăн пек калама пулать: „кулак, есĕ—тăшман, ан алхас, чарăн, колхоз пурлăхне ан çарат“... Йе тата: „капиталис, есĕ—тăшман, пирĕн çине вăрçăпа ан кил, чарăн... (пожалуйста есĕ, тăшман, чарăн!)“—тесе каламалла хушать М. Ђамађ. Хальхи тăшмансем—кулаксем алхасмаççĕ, вĕсем „светтуй“ пек „тăп“ пурăнма тăрăшаççĕ, класлă сисĕм çемçеннĕ çĕрте колхозсем тавра, йе колхозсене кĕрсе хуллен-хуллен угаççĕ, колхоз пурлăхне шĕкĕ йевĕр шĕкĕлчеççĕ. Анчах çак поет методĕпе вĕсене хирĕç мĕнле кĕрешес? Йе халĕ пирĕн: тăшман ес, шăппăн çӳреме пăрах, темеле?

Тата тепĕр тĕслĕх: Ђамађ „тăшман“ пусне çапса ватасшăн, ça ăнпа та вăл **„кĕрешӳре черет“** тăрать. Кун пек йапалана ку вăхăта çитсе те никам та каламан пулĕ,—анчах йулашкинчен поет каларĕ. Кĕрешӳре те черет пур иккен! Тата „кĕрешӳ хирĕнче... дачă“ та пур иккен! Тата „Тăшмана“ пирĕн ирĕк памала иккен! „Хăрамасть тĕк тăшман, **петĕр**...“—тесе вĕрентет поет.

Çакăн пек М. Ђамађăн шухăшĕсем. Вĕсем—пĕрре те тĕрĕс мар, вĕсем—веçех пăтранса пĕтнĕ оппортунисла шухăшсем. Çапла вара, автăр: „еп йалан—кĕрешӳ шестерни“, тесе çухăрни те пустуйах йанрать,—усăсăр!

М. Ђамађăн ытти шухăшĕсем те пăтранса пĕтнĕ. Сăмахран, çак вырăна илăр:

„Ĕçпеле кĕрешӳ—чĕре ман...
Чĕрепе,
Йунăмпа вĕсен еп.
Хам ĕçре асамлă чĕре мар,
Çап та çур,
Комсомол,
Вĕсене“—(4—5 стр.).

Купта каланă шухăшсем „кутсăр-пуçсăр“ тăман пекех. Пĕр вырăнне кăна илепĕр. „Асамлă чĕре“ тени мĕне пĕлтерет-ха? „Асамлă“ сăмах „асам“—„асамăç“ сăмахран пулнă. Вырсла каласан: „асам—волшебство, асамăç—волшебник, асамла-ворожить“ пулать. Кам ăнланать вĕсемшĕн ку ытла та кулăшла тухнă. Тата вăл ĕçре кайа йулакансем пирки „çап та çур“ тет. Комсомол ку методпа ĕçленине епĕр пĕлместпĕр (епĕ хам комсомолта 12 çул ытла тăтăм, анчах ун пеккине курман).

Сăвăсен техники те начар. Сăвăсен чĕлхи йакалах мар, ытла та мăка. Сăвăсен хăш-пĕр вырăнĕсем калăк „чĕлхипе“ çырнăпа пĕрех,—çавăнпа та ăнланмала мар. Хăш-пĕр примерсене курăпăр: „чĕрепе парнелеп йышлăрах..“, „çихĕрет“, „епĕр вăйлăн вăй пухнă“, „кĕрешӳри хайарлăхпа кĕрешӳллех çĕнсе пырар“, „темен аслăшех“, „çунатланнă çил çунат“, „епĕр йышлă паттăрçах“, тата ыттисем те, т. ыт. те. Сăвăсене тата кирлĕ мар çĕргех сапаласа пĕтернĕ.

Йулашкинчен çакна каламала: М. Ђамађăн политикла ыйтусене тарăнрах вĕренмеле; чăваш чĕлхине вĕренмеле (чăваш писателĕсем çырнисене вулама кирлĕ, чăваш чĕлхи маçтăрĕсем—С. Елкер, Хумма Çеменĕ, Митта Ваçлейĕ, Йуман тата ыттисем çырнисене те вуламала, вĕсенчен вĕренмеле); сăвă техникине алла çавăрса илмеле. Сăвăн ăшчикки тумĕ начар пулсан—унăн нимле хак та çук. Начар сăвăсемпе „тăшмана“ (класла тăшмана) „персе хуçма“ çук. Начар сăвăсем „бомба“ пулаймаççĕ. Ытла пысăкка хапсăнма та кирлĕ мар, сахалтарах „еплетес“ пулать.

Çапла „Тантăшсене“ йатлă сборник вырнаçуллă сборник пулайман. Ăна автăр ача пăчасем валђи çырнă, анчах ачасемшĕн вĕсем йавăр та, сийенлĕ те...

Шупашкăр, 14-1—34 çул.

---

**Вукопов Ф.**

## Мăрађка Микихверĕн „Елнет“ драмийĕ пирки

„Мăранка Микихверĕн „Елнет“ драми 1905-мĕш çулхи чăваш ĕçхалах хушшинче пулса иртнĕ револђуцине кăтартасшăн. Драмăн сӳжетне Мăрађка Микихверĕ „Елнет“ шывĕ çинче бурлаксен 1905 çулта пулса иртнĕ пăлхавăрĕнчен илнĕ пулмала.

Елнет шывĕ çинче ĕçлеме йывăр. Пĕр йенчен тӳсме çук сивĕ кĕркунне (Хăйĕн ывăлне Йапуђ вăрçинче çухатнă Йакур сивве тусеймесĕр вилет). Тепĕр йенчен ытти патшалăхра, Англире йавăç хакĕ ӳкнине кура Карпов хуçа бурлаксен ĕçкун хакне 60 пусран 30 пуса çитиччен чакарать.

Кунсăр пусне драмă тăрăх, Мĕкĕте кулак бурлаксен кил-çуртĕнче сурăх-качакасене туртса илнине пăртакçă ăнланма пулать. Çаксене кăтартнипе автăр чăваш ĕçхалăхĕ 1905 çулсенче йеппе пусмăр айĕнче пурăннине çителĕклĕ таран çутатса парăм тесе шухашланă пулмала. Çакнашкал пусмăр айĕнче пурăнакан чăваш ĕçалăхĕн пĕтĕм Раççейре пыракан револђуцине хутшăнасах пулать ĕнтĕ. Хутшăнмасăр нийепле те пулма пултараймасть. Анчах, çав пусмăрта пурнакан чăваш ĕсхалăхне (драмă тăрăх бурлаксене) пĕр йенчен меншевиксенчен пĕри Чегалкин кайала туртать, тепĕр йен-

чен—боҫшевиксенчен пӗри—Морев йулташ хуҫасене хирӗҫ кӗрешме чӗнет. Ҫак икӗ терлӗ шухӑшлӑ икӗ ҫынран хӑшне итлемеле, хӑшин хыҫӗнчен каймала—бурлаксем тавҫӑрса илме пултараймаҫҫӗ. Ҫак ыйту вара драмӑн тӗп шухӑшне йышӑнса тӑрат тесе калама йурат.

Ҫапла тӗрлӗрен ӳкӗтсем, тӗрлӗрен вӗрентӳсем пулнипе, ытти наци ӗҫхалӑхӗ пек чӑваш ӗҫхалӑхӗ те хӑш йӗнеле сулӑнассине сасартӑках тавҫӑрса илеймен ӗнтӗ вӑл. Мӗншӗн тесен кӑшни парти хӑйне хӑй мухтаса, кашни хӑй йенне туртнӑ. Ҫавӑнпа та Елнет шывӗ ҫинче ӗҫлекен бурлаксенчен хӑшӗсем Чегалкин меншевик йенне, хӑшӗсем Морев—боҫшевик йенне сулӑннине автӑр тӗрӗс кӑтартнӑ тесе шухӑшлатӑп, ыйтӑвӑн вӗҫне илсе пӑхсан та ӑна автӑр тӗрӗс сӳтсе йавнӑ тесе каласшӑн. Драмӑн ҫитӗнӳвӗсем кунсӑр пуҫне те сахалах мар. Драмӑра панӑ сӑнласенчен хӑшӗ-пӗрисем паллӑ, типлӑ сӑнлӑхсем: Микула—йӑвӑҫ йухтарнӑ ҫӗрге ӗҫлекен боҫшевиксем майлӑ, Морев йӑвӑҫ савӑтӗнчи рабочи-боҫшевик, Карпов—хуҫа, Мӗкӗте кулак, Иван—меншевиксен хыҫӗнчен сӗтӗрнекенскер. Вӗсем хӑйсен вырӑнӗсенче тесе калама йурат. Кунсӑр пуҫне драмӑн вӗҫӗ пиг те килӗшӳлӗ пек. 1905 ҫулхи революҫипе ӗҫхалӑх чарӑнмаст. Ӗҫхалӑх вӑл, експлуататтӑрсене хирӗҫ експлуататтӑрсене ҫӗмӗрсе тӑкаччен, влаҫа хӑй аллине иличченех кӗрешет. Анчах вӑл ӗҫ бурлаксен малти кунӗсенче... Анчах, вӑл ӗҫ Октӑбӗр революҫинче ҫех пурнӑҫланат. Ҫавӑнпа та автӑр драминче йулашкинчен хӗрарӑм—Укахви: Мана та пӑшал парӑр! Епӗ те ҫапӑҫма пултаратӑп—тесе малала чупат. Ку ҫапла пулма тивӗҫ те, мӗшӗн тесен малта класслӑ, хӗрӳ те йунлӑ кӗрешӳсенче хӗрарӑмсем те арҫынсемпе йунашар тӑрсах каласлӑ тӑшмансемпе ҫапҫӑҫрӗҫе, хӗрарӑмсем те Октӑбӗр революҫинче хӗрӳлӗн ҫапаҫса хӑйсене мӗн кирлине хӑйсен аллисене илчӗҫӗ.

Драмӑ чӗлхе йенчен те аптраса каймаст, анчах, ҫак ҫитӗнӳсемпе пӗрлех драмӑн ҫитменлӗхӗсем ҫук тесе калама йурамаст. Вӑл ҫитменлӗхсем ак ҫаксем пулмала:

1. Бурлаксен пӑлхавӑр сӑлтавӗсем драмӑра—кӗрхи сивӗ, бурлаксен ӗҫ хакне 60 пусран 30 пуса хӑварни, Укахвийе сӑмахсем урлӑ Мӗкӗте хӑш пӗр бурлаксен выҫӑхӗсене парӑмсемшӗн туртса илнине пӗлтерни, Мӗкӗте кулак—бурлаксене хӑй аллинче тытни. Бурлаксем, Морев боҫшевик йӗртсе пынипе хуҫана хирӗҫ тапӑннӑ ҫӗрте, тата ытти хӑйсен пухӑвӗсенче те ҫав бурлаксем хуҫаран икӗ сурӑхпа (Ҫеменӗн икӗ сурӑхне Мӗкӗте туртса илнине бурлаксем Укахйе сӑмахӗсем урлӑ пӗлеҫҫӗ) 30 пус укҫаран пуҫне урӑх нимӗн те ыйтмаҫҫӗ. Политикӑ ыйтусем уйрӑм калаҫусенче ҫеҫ тӗл пулкалаҫҫӗ. Ку, ман шутпа пысӑк ҫитменлӗх, мӗншӗн тесен 1905-мӗш ҫулхи революҫи пулнӑ вӑхӑтра чӑваш ӗҫхалӑхӗ хуҫасем умне економиклӗ ыйтусемсӗр пуҫне политиклӑ ыйтусем те кӑларса тӑратнӑ. Йепле политикле ыйтусем кӑларса тӑратнӑ-ха чӑваш ӗҫхресченӗсем хуҫасем умне?—Йушунӗв хӑйӗн „Чувашская АССР“ йатлӑ кӗнекинче, акӑ йепле политикле ыйтусем: „Хӑйсен пухӑвӗсенче йышӑннӑ резолюцисенче вӗсем, патша правителствипе кӗрешме чӗннӗ, пӗтӗм улпутсен ҫӗрӗсене хресченсене пама, ҫул ҫитнисене суйлав прави памашкӑн, революцишӗн кӗрешнӗшӗн арӗсленӗ йулташсене ирӗке кӑларма, ирӗклӗ пухусем тума тата ирӗклӗ сӑмах, пичет, прогрессивлӑ налог, сословисене пӗр тикӗслеме, чӑваш шкулӗсенче чӑвашла вӗрентме, влаҫра ларакансене суйласа лартмала тума, тата ыттисене те ыйтнӑ“. Ҫакӑнта кӑтартнӑ политикӑла ыйтусем Мӑраҫка драминче ҫителӗклӗ вырӑн йышӑнса тӑраймаҫҫӗ.

2. 1905-мӗш ҫулхи революцинче чӑваш ӗҫхалӑхӗн пуҫне пуринчен ытларах ес-ерсем ҫавӑрнӑ. Вӗсем революцине чӑрмавласа пынӑ. Вӗсем ийтнӗ ӗмӗрсенче вырӑс патшалӑхӗ туртса илнӗ чӑвашсен ҫӗрӗсене тепӗр хут таварса илессишӗн, чӑваш ҫӗршывӗсенче пурӑнакан вырӑссене хуса кӑларассишӗн тӑнӑ. Ку вырӑссемпе чӑвашсен хушшинчи нацилӗ ҫапӑҫу патне илсе пынӑ пулӗччӗ, патша влаҫӗпе черносотенцӑсемшӗн пит те усӑлӑ йапала пулса тӑнӑ пулӗччӗ. Ҫак ыйтӑва пӗрер сӑнлӑх урлӑ сӳтсе йавнӑ пулсан драмӑшӑн пит аван пулмала пулнӑ та, анчах, чӑваш ӗҫхалӑх хушшинчи революцинчи пысӑк чӑрмавне—Китне, Мӑраҫка курма пултарайман.

Чегалкин сӑнлӑхне аса илсен, вӑл ес-ер сӑнлӑхӗ мар. Вӑл меншевик сӑнлахӗ. Вӑл Мӗкӗте калашле—„пӗрмайах, учредилкӑ урлӑ влаҫа халӑха илсе паратпӑр тесе, лӑпӑргатса ҫӳрет“. Анчах вӑл та пулин пур йенчен те писсе ҫитнӗ пулин те тарӑнӑн кӑтартса панӑ сӑнлӑх мар. Автӑр вӑл ҫурма сӑнлӑх урлӑ меншевиксем ӗҫхалӑхне мӗнешкел сийен кӳнине ҫителӗклӗ таран кӑтартса параймаи. Курса ларакансем Чегалкӑн урлӑ меншевиксен политикине кирлӗ таран ӑнласа илеймеҫҫӗ. Ку сӑнлӑх ҫинче автӑр паллах, ҫине тӑрса, тимлӗн ӗҫлемеле пулнӑ.

3. Драмӑн 1-мӗш картинӗ уйра, 2-мӗшӗ—савӑт тулашӗнче, 3-мӗш таҫта, савӑтран айакра, 4-мӗшӗ вӑрманта пулса иртет. Ҫак ӗнтӗ спектакӗле лартас ӗҫе пит те йӑвӑрлатат. Ҫавнашкалах шывра ларакан сулӑ ҫинчи действисенче те кӑтартма та йӑвӑр.

4. Кунта ҫакна та каласа хӑварас пулат. I-мӗш пайри I-мӗш картинпа II мӗш картин хушшинче ҫыхӑну ҫук. I мӗш картин пӗтӗм ытти картинсенчен уйӑрӑлса тӑрат. Пӗрремӗш картинра выҫӑхкансенчен пӗри те ытти картинсенче куҫа курӑнмаҫҫӗ. Павӑлпа унӑн ашше Йакур—иккӗшӗ те вилсе кайаҫҫӗ.

5. Иван сӑнлӑхӗ Елнетри йӑвӑҫ йухтаракан, меншевиксем хыҫӗнчен сӗтӗрӗнме пӑхаканскерӗн сӑнлӑхӗ, ӑна килти пурлӑх йенчен йепле вырӑн йышӑнса тӑнине кӑтартнӑ пулсан ыглашши пулас ҫукчӗ. Унсӑрӑн Иван йепле ҫын иккенни уҫҫӑн курӑнмаст.

6. Кусемсӗр пуҫне драмӑра ытлашши вӑрӑм калаҫусем (диалогсем) пур. Вӑл калаҫусем итлесе ларакана ывӑнтармалипех ывӑнтармала.

7. Йулашкинчен, бурлаксем полицин отретне хӗҫпӑшалсӑрлантарнине тӗплӗнрех шухӑшласа пӑхсан ӗненессӗм килмест. Ку вырӑна автӑрӑн тӗплӗрех шухӑшласа йакатмала пулнӑ. Ҫапла драмӑра ҫитменлӗхсем чылайах. Ҫпектакӑле лартас умӗн автӑрӑн академи театӑрӗнче нумай ӗҫлемеле. Пичетлес умӗн редакторӑн ку пйессӑ камшӑн пичетленнине тӗплӗрех шухӑшламала пулнӑ. Хаҫ ӑна йусамасӑрах илсе пӑхсан, вӑл профтеатӑр ӑн, тата вырӑнсенчи драмкружоксемшӗн те писсе ҫитнӗ йапала теме ҫук.

Хакĕ 40 пус.


# „ТРАКТĂР“

Чăваш Совет писатĕлĕсен альманахĕ

## 8-мĕш № пичетленсе тухрĕ

**Унта çак автăрсен произведенийĕсем пичетленнĕ:**

П. Н. Осипов „Çĕнĕ хум“ (пйесса), Уйăп Мишши „Йулашки штурмсем“ (поемăн малтанхи пайĕ), Еллийĕв „Йышран уйăрăлсан“ (калав), В. И. Краснов „Тăвала“ (романăн малали сыпăкĕсем), В. Деферан „Екран“ (поемă), Е. Захаров „Йеркĕв“ поемă çинчен критиклă статйа), В. Долгов-Хулар „А. Петтокин „Çирĕм иккĕ“ çинчен“, Н. Т. Васанка „Чăвашла илемлĕ литературă кăларас ĕç“ (статйа), тата Ф. Мецеватăв „Ĕç йуррисем çинчен“ (статйа).

## „Трактăр“ альманах 9-мĕш номĕр пичетре

У н т а:

Мăраньккав „Лайăх пурăнатпăр“ (пйесса), Калайăн „Сăрçи хумхансан“ (повĕç), Талвирăн „Ылттăнту“ (роман), Кели, Талмăрса пйессисем (литархивĕ), Кипек, Лашман очĕркĕсем, тата Елкерĕн „Тĕнче вăрçи кунĕсем“ (мемуарсем) пичетленмеле.

## Пурте „Трактăр“ альманаха илсе вулама васкăр!

**Пĕр №-ĕн хакĕ 1 т. 75 пус.**